6423

# ЯЛАВ БИБЛИОТЕКИ

№ 1



Василий ИГНАТЬЕВ

# ПĔЧĔК АКĂШСЕН ТАШШИ

Чăвашгосиздат
Шупашкар 1957

«ЯЛАВ» БИБЛИОТЕКИ № 1

ВАСИЛИЙ ИГНАТЬЕВ

# ПĔЧĔК АКĂШСЕН ТАШШИ

*Калавсем*

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

Чăваш АССР Государство издательстви
Шупашкар — 1957

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палатой
«11» февраля 1957 г.
№ 39

## ВАСИЛИЙ ИГНАТЬЕВ

*Василий Герасимович Игнатьев 1934 çулта Первомайски районěнчи Каншел ялěнче колхозник çемйинче çуралнă.*

*1952 çулта, Первомайски вăтам шкулне пěтерсен, Шупашкарти Пединститута историпе филологи факультетне вěренме кěнě. 1956 çулта институтран вěренсе тухнă, юлашки экзамен парсан тепěр кунах Совет Çарне тухса кайнă.*

*1948 çулта комсомола кěнě.*

*Литературăна пěчěкренех юратнă. Шкулта чухне сăвăсем, калавсем çырнă, вěсене стена хаçатсенче, алăпа çырса кăларакан литература журналěнче пичетленě. 10-мěш класра вěреннě чухне «Коммунизм ялавě» корреспонденчěсен канашлăвěнче пулнă, мěншěн тесен ун чухне В. Игнатьев хаçата нумай пěчěк заметкăсем çырса тăнă.*

*Пěрремěш калавě «Ялав» журналта 1955 çулта пичетленнě.*

*В. Игнатьев хăй ăсталăхне, пěлÿлěхне кунран-кун ÿстерсе пыма тăрăшать.*

---

Редактор *Г. А. Ефимов.*

НТ 01013 Подписано к печати 12. 1. 1957 г. Формат 70×108 1/32.
Объем 0,5 бум. л.—1,37 п. л. Заказ № 3922. Тираж 2500 экз. Цена 50 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.
*г. Чебоксары, ул. Володарского, 5.*

# ПĔЧĔК АКĂШСЕН ТАШШИ

Унăн умĕнче çĕнĕ тĕнче уçăлнă — музыка тĕнчи. Унăн чĕринче çĕнĕ туйăм çуралнă — музыка туйăмĕ.

Вăл çамрăк-ха, çирĕм икĕ çулта çеç. Хăмăр кусĕсем тунсăхлăрах пăхаççĕ. Хăйне яланах лăпкă та кăшт именчĕклĕ тытнинче çын кăмăлне тӳрех çемçетекен, ăна хăй енне туртакан вăрттăн вăй пурри палăрса тăрать. Сăн-пичĕ çине пăхсан, ку çамрăк çын нихçан та çăмăлттайла шухăшлама пултарайманнине тӳрех туятăн.

Унпа эпĕ пĕлтĕр паллашнăччĕ. Экзамен тытакан пӳлĕм алăкĕ умĕнче эпир тăваттăн тăраттăмăр. Шалта рояль сасси илтĕнет — профессор пирĕн умран кĕнĕ хĕрачана тĕрĕслет. Эпир хамăр черет çитессе кĕтетпĕр.

— Эсир ăçтан килнĕ?—ыйтрăм эпĕ хампа юнашар тăракан çамрăк çынтан.

— Чăваш республикинчен.

— Музыка училищи пĕтернĕ пуль?

— Çук... Пединститут...

— Пединститут? Мĕнле-ха апла? — тĕлĕнтĕм эпĕ.

Вăл кулса илчĕ.

— Çаплах...

Çак вăхăтра пӳлĕмрен хĕрача тухрĕ те, профессор патне манпа калаçакан юлташ кĕчĕ. Пĕр сехете яхăн пулчĕ вăл унта, профессор пединститут хыççăн консерваторие килсе лекнĕ çынна уйрăмах хытă тĕрĕслерĕ пулас. Юлашкинчен çамрăк çын коридора тухрĕ.

— Ну, мĕнле? — чупса пытăмăр эпир ун патне.

— Аван терĕç.

— Эпир унпа пĕр группăнах лекрĕмĕр, хамăра экзаменсем тыттарнă профессор патĕнчех вĕрентĕмĕр. Вăл мĕнпур чун-хавалне хурса ĕçлерĕ, музыка — унăн пурнăçĕ пулса тăчĕ. Те хăй ĕçне ытла та юратнăран, те унпа кăна та мар—пĕлместĕп, анчах çак студент пуринчен те ытларах кăмăла кайрĕ. Малтанхи кунсенчех манăн ăна хамăн çывăх юлташ тăвас килетчĕ, халĕ эпир акă — уйрăлми туссем...

Иртнĕ вырсарникун унпа консерваторинчи пĕр класа иккĕн çеç кĕрсе лартăмăр. Вăл çапла каларĕ: «Паян ман пуçра çĕнĕ кĕвĕсем

çуралчĕç». Унтан рояль умне ларчĕ те тӳрех Чайковскин «Пĕчĕк акăшсен ташшине» калама пуçларĕ. Эпĕ ăна самантрах чартăм.

— Итле-ха, тусăм, мĕнле йăла вăл санăн: эсĕ, рояль умне ларсан, кирек хăçан та малтан «Пĕчĕк акăшсен ташшине» каласа илетĕн...

Юлташăм, çакă ахаль ыйтурах темле хăрамалла япала курнă пек, ман çине чăр пăхса илчĕ, унăн сăнĕ сасартăк улшăннине те эпĕ аванах сисрĕм... Вăл ним калама та пĕлмерĕ.

— Мĕн те пулин аса килмерĕ пулĕ те? — ыйтрăм эпĕ асăрханса.

Вăл, ман çине пăхмасăр, рояль умне çаврăнса ларчĕ те каллех хăй юратнă кĕввине — «Пĕчĕк акăшсен ташшине» ерипен калама пуçларĕ. Унăн куçĕсем халь ялкăшса, çунса тăчĕç, малтан шуралса кайнă пичĕ хĕрлĕ тĕспе витĕнчĕ... Пӳлĕмре нимĕн те юлмарĕ пек, ăна пĕр аслă Чайковский хăйĕн мĕнпур пуянлăхĕпе, çепĕçлĕхĕпе тултарса тăчĕ. Çапах та эпĕ лайăх пĕлтĕм: ман юлташ, тĕрĕссипе, «Пĕчĕк акăшсен ташшине» каламасть, вăл пачах та урăх кĕвĕ вылять. Çак кĕвĕ халлĕхе никама та паллă мар — вăл çамрăк çын чĕринче çеç янăраса тăрать. Эпĕ йăнăшман иккен: вăл кĕвĕ — унăн юратăвĕ, унăн пурнăçĕ пулнă...

Çак кун ун чĕрин вĕри таппи, ун кăмăл-туйăмĕн таса çамрăклăхĕ пушшех те уççăнрах палăрчĕ. Ку çеç те мар, çак каç эпĕ малтанхи юратун хăвачĕ, вăл хăварнă йĕрĕн вилĕмсĕрлĕхĕ мĕнле пулнине татах та тарăнрах ăнланса илтĕм.

Вăл мана акă мĕн каласа пачĕ.

— Шăпах пилĕк çул каялла, июль пуçламăшĕнче, эпир — атте, пичче тата эпĕ — вăрмана тухса кайрăмăр. Пичче авланнăччĕ ĕнтĕ, уйрăлса тухма шутларĕ — çурт лартмалла. Хирти ĕçсем пуçланиччен атте çав пӳртлĕх пĕренесем касса хатĕрлес терĕ.

Хуравай вăрманĕ пиртен ытла инçех мар. Каçа çитсе выртмалла тухнăскерсем, унта эпир хĕвел анас умĕн пырса кĕтĕмĕр, пĕр тарăн çырма урлă каçса, лесник çурчĕ патне çитсе чарăнтăмăр. Уçă чӳречерен илемлĕ музыка янăраса тухать тата, сарлака çурăмне тул еннелле туса, пĕр çын ларни курăнать. Вăл, урапа сассине илтсе, пирĕн çине çаврăнса пăхрĕ.

— А-а, Елизар! — хавассăн кăшкăрчĕ вăл. — Салам, салам!.. Чим-ха, тăхта, эпĕ хамах тухам... — Лесник çавăнтах чӳрече умĕнчен çухалчĕ — пысăк хапха уçăлса та кайрĕ.

— Давай, давай, кĕртер лашана! — хыпаланса каларĕ лесник, унтан пире алă парса тухрĕ: малтан аттене, ун хыççăн пиччене, юлашкинчен — мана.

— Ку та санăн-и-ха? — ыйтрĕ вăл, ман çине кăтартса.

— Манăн. Вăталăххи ĕнтĕ...

— Э-эй, апла сан авлантармаллисем татах та пур иккен-ха! —

куç хĕссе илчĕ лесник. — Тепĕр çул каллех пĕрене касма килмелле!..

— Тепĕр çулах мар пуль-ха та... Малтан институт пĕтерес пулать, кайран вара, ерипен, авлантарасси çинчен те шутлама пулĕ.

— Институтра вĕренет-им-ха?

— Çук, кăçал çеç вуннă пĕтерчĕ...

— Аван, аван, — ман çине ăшшăн пăхса каларĕ лесник, унтан каллех хыпаланса ÿкрĕ.— Давай, давай, кĕртсе тăварар! — тесе, вăл лава хăех картишне кĕртсе ячĕ.

Лашана апат парса, эпир пÿрте кĕтĕмĕр. Пÿлĕмре таса, типтерлĕ. Картун тавраш кун пек пулакан марччĕ, кунта вара пĕр-пĕр служащи пурăнать, тейĕн. Чÿречесене илемлĕ чĕнтĕр карнă, урайĕ йăлтăртатса çеç тăрать — сăрланă. Стена çумĕнче кĕленче алăклă икĕ пысăк шкап, кĕтесре «Родина» приемник кĕрлесе ларать. Пуринчен ытла мана пĕр япала интереслентерсе пăрахрĕ, вăл—пианино. «Ниушлĕ лесник музыкăна та пĕлет? Пианинăпа та калать-ши вара?» — тĕлĕнсе шутларăм эпĕ, анчах хам нимĕн те шарламарăм.

— Вырнаçăр, вырнаçăр, — сĕнчĕ лесник пире, хăй каллех тухса кайрĕ.

Лесник — ман аттен çывăх юлташĕ. Пĕр-пĕринпе вĕсем салтакра туслашнă, вăрçа та пĕрлех çапăçса иртнĕ. Вăл пирĕн пата пĕр-икĕ хут кĕрсе тухнине те астăватăп-ха эпĕ, аттепе пĕрле ÿкерттернĕ карточкисем те пур. Хăй вăл халĕ те гимнастеркăпах çÿрет, атăпа, хулăн пуставран çĕлетнĕ галифепе. Çан-çурăмĕ ун тачка та сарлака, сайралса пуçланă çÿçĕ çăт выртать.

— Хĕрарăмсем паян пурте кайса пĕтнĕ-ха, — терĕ лесник, сĕтел çине пĕр турилкке тăварланă кăмпа лартса. — Арăм кăшт утă çулкаласа çÿрес терĕ, Лидăпа Георгий тăста кайнă? Те — яла... Ну, эпир кунта хамăрах мĕнле те пулсан... — Лесник шкафа уçрĕ те унтан хĕрлĕ эрех кĕленчи кăларчĕ.

— Мĕскер эс, Иван! — эрех кĕленчине курса каларĕ атте. — Кирлĕ марччĕ...

— Ничего, ничего, эпир кăшт çеç сыпса ярăпăр, тĕлпулу ячĕпе кăна... — Вăл, черккесем çине эрех тултарса, кашнин умнех лартса тухрĕ. Эпĕ ĕçесшĕн марччĕ, анчах лесник мана ирĕксĕрлесех ĕçтерчĕ: «Мĕскер тата эс? Халь çын пулнă ĕнтĕ, вăтам шкул пĕтернĕ те!»... Хăнăхманскер, пуçра самаях темĕн кашла пуçланине туйрăм эпĕ, ÿт-пÿ те лăстăрах кайнă пек пулчĕ. Кăшт уçăлас тесе, тула тухрăм...

Картун пÿрчĕ пысăках мар тăваткăл уçланкă варринче вырнаçнă. Йĕри-таврах — çăра вăрман. Уçланкăн сылтăм енче пĕрене тăрăхĕсем, вутă шаршанĕсем купаланса тăраççĕ. Вĕрлĕк карта тытнă пахча çумĕнче пĕлтĕрхи утă капанĕн юлашки чалăшса ларать, унтах пĕр хĕрлĕ ĕнепе пушмак пăру кавлесе тăраççĕ. Уçланкăн çурçĕр енче — тарăн çырма, Хăйăрлă çырми теççĕ иккен ăна.

Тулта кăшт уçăлкаласа çӳренĕ хыççăн эпĕ каллех пӳрте кĕтĕм. Сĕтел хушшинче ĕнтĕ самаях шавлă калаçу пуçланса кайнă. Лесник хăйĕн вăрманти пурнăçĕ çинчен каласа парать, атте — колхозри ĕçсем çинчен... Лесник вăрçăччен комбайнер пулнă, анчах вăрçă хыççăн МТС-а кайман, леснике килсе кĕнĕ. Халĕ вăл ак тепрер çултан МТС-ах каймалла пуль тесе калаçать...

Мана, уçă чӳрече патĕнче лараканскере, сасартăк вăрманта мотор сасси илтĕннĕ пек пулчĕ. Кăшт тăрсан, картун умне чăнах та мотоцикл кĕрлеттерсе тухнине куртăм. Рульне пĕр вунпилĕк çулхи ача тытнă, хыçалта — вырăсла тумланнă çамрăк хĕр ларать.

— Ак, çитрĕç хайхисем! — терĕ лесник, чӳрече патне пырса. — Хĕрачи вăл ман консерваторире вĕренет-ха, виçĕ курс пĕтерчĕ.

Эпĕ тинех ăнланса илтĕм: пианинăпа хĕрача вылять иккен... Хам та пĕлместĕп — мĕншĕн, анчах вăл пӳрте кĕрессине хумханса кĕтрĕм эпĕ, ăна ман хăвăртрах курас килчĕ...

Лесник хĕрĕ сĕтел хушшинче палламан çынсем ларнинчен ним чухлĕ те тĕлĕнмерĕ пулас, кĕрсенех пире хăвăрт кăна сывлăх сунчĕ те тепĕр пӳлĕме кĕрсе кайрĕ. Эпĕ унăн çинçе пилĕкĕпе кăтра çӳçне çеç курса юлма ĕлкĕртĕм.

— Ну, мĕн ялта? — ыйтрĕ ашшĕ.

— Нимех те! — ответлерĕ хĕр шалта, унтан каллех пӳлĕмрен тухрĕ. — Анне килте çук-им? — ыйтрĕ вăл ашшĕнчен. Пирĕн çине пăхса илчĕ. Унăн куçĕсемпе ман куçсем ăнсăртран кăна тĕл пулсан, эпĕ темшĕн именсе, айккинелле пăхрăм... Хĕрача каллех тула тухса кайрĕ. Тепĕр самантранах ăна эпĕ, хулă татки тытнăскерне, утă капанĕ çумĕнче тăракан ĕнесем патĕнче куртăм, вĕсене вăл картишнелле хăваласа килчĕ...

Амăшĕ килнĕ çĕре лесник хĕрĕ килти пур ĕçсене те туса пĕтерчĕ ĕнтĕ: ĕнине сурĕ, сысна çурисене, вĕсемпе пĕчĕк ача пек калаçа-калаçа, апат çитерчĕ, пахчаран сухан та касса кĕчĕ. Яшкине те пире хăех антарса пачĕ, ман умма ыттисеннинчен илемлĕрех кăвак хĕрлĕ турилккепе лартнă пек туйăнчĕ.

— Пĕрле ларса çи, — каларĕ ăна ку вăхăтра ĕçрен таврăнма ĕлкĕрнĕ амăшĕ.

— Ман çиес килмест! — терĕ те хĕр, пӳлĕме кĕрсе çухалчĕ...

Апат хыççăн аттесем пӳртре татах калаçса ларчĕç. Чылай вăхăт çитнĕччĕ ĕнтĕ, юлашкинчен атте ура çине тăчĕ.

— Ну, выртма та вăхăт пуль, ăçта вырнаçтаран пире? — терĕ вăл, лесник çине пăхса. — Аслăк çинче май пур-и унта?

— Ма аслăк çинче? Пӳртрех выртма пулать.

— Э-эй, халь пӳртре выртса тăрăн-и вара!

— Аслăк çинче те начар мар-ха та... халь кăна çĕнĕ утă типĕтсе

хăпартнăччĕ... — Лесник пӳлĕм енне пăхрĕ. — Лида, хăнасене вырăн майлаштарса пар-ха эс унта, — хушрĕ вăл хĕрне.

— Юрать! — илтĕнчĕ шалта.

Тепĕр самантран эпир аслăк çине хăпарса та выртрăмăр. Хĕрача пире шурă простыньсем сарса панă, икĕ çӳхе утиял хунă...

— Ак епле кунта-а, — текелесе, аттепе пичче таса вырăн çине кĕрсе выртрĕç те харлаттара та пуçларĕç. Эпĕ нумайччен куçа хупмасăр выртрăм. Лупас çинчи çĕнĕ утă шăрши сăмсана ыррăн кăтăкларĕ, хускалкаланă май чăштăр-чăштăр туса ванчĕ... Паçăртанпах эпĕ пуç тăрринче темскер сăрлатнă сасă итлесе выртрăм, кашта çинче шурă япаласем çакăнса тăнине асăрхарăм. — Мĕн-ха, — тесе выртнă çĕртен тăрса лартăм та тĕттĕмелле тинкерсе пăхрăм: шурă япалисем мунчала çыххисем пулнă иккен, сăрлатаканни — тĕкĕлтура йăви. Леш вĕçĕнче чăхсем ларса тухнă...

Сасартăк вăрманта, инçех те мар, темле кайăк салхуллăн кăшкăра пуçларĕ, кашта çинчи чăхсем, шартах сиксе, кăтăкласа илчĕç... Эпĕ вара, аттепе пиччене вăратас мар тесе, ерипен атă тăхăнса ятăм та чикмек тăрăх çĕре антăм, карташ варрине тухса тăтăм.

Вăрманта çемçе те ăшă каç тăрать. Лапсăркка кĕлеткеллĕ каç тĕттĕмĕ лупас тăррисенче упаленсе çӳрет пек, мĕнпур хуралтăсене хăйĕн темле асамлă кĕлеткипе çупăрласа илнĕн туйăнать. Шăп. Хушăран кăна картари ĕнесем канлĕн машлатса ыраççĕ тата пирĕн лаша, кăмпăрт-кăмпăрт тутарса, утă çиме пуçлать.

Сасартăк картиш варрипе шап-шурă япала çăмха пек кусса иртрĕ те йăпăрт! çеç çенĕх алăкĕ умне хăпарса ларчĕ — кушак çури иккен: ачашшăн мяуклатса илчĕ... Эпĕ вара, темшĕн ача пек хĕпĕртесе кайса, хам тĕллĕн хам кулса илтĕм те, кĕçналăка ерипен уçса, картун умне тухса лартăм. Лупас айĕнче, çунаттисемпе шап-шап тутарса, автан авăтса ячĕ.

Чылайччен çывăраймарăм эпĕ вăл каç. Çак асамлăн туйăнакан тавралăхра манăн чĕрем кас-кас çĕкленсе, кас-кас канăçсăр тапрĕ. Куçсем кăтрашка тăраллă вăрман çине, çырма хĕррипе хăпаракан шурă тĕтре çине хĕпĕртесе пăхрĕç, хăлхасем, вăрманти кашни сас-чĕвве хăйне майлă илтсе, ман умра каллех юмахри евĕрлĕ тĕнче çуратрĕç... Юлашкинчен, хĕвелтухăç енĕ шурала пуçланине туйса, эпĕ кĕçналăкран малтанхи пекех асăрханса кĕтĕм те аслăк çине хăпарса выртрăм. Ыйхă тĕлĕшпе хайхи кайăк каллех салхуллăн кăшкăрнине илтрĕм, аякра — йытă вĕрнĕ пек туйăнчĕ... Тĕтреллĕ, чĕлтĕртетсе çеç тăракан ăсра кĕтмен çĕртен лесникпе унăн арăмĕ, вĕсен хĕрĕпе ачи çуралса тухрĕç... Анчах самантрах лесникĕ те, арăмĕ те, мотоциклпа çӳрекен çамрăк ачи те ман умран пĕрин хыççăн тепри таçта сирĕлсе кайса çухалчĕç те, вĕсен вырăнне лесник хĕрĕ хăй пĕччен çеç йышăнса илчĕ. Вăл ман пата çывхарнăçем çывхара пуçларĕ, пит-куçĕ юмахри пике

пит-кусӗ пек ҫуталса, илемленсе пычӗ... Анчах ман умма ҫитсен вӑл кӑшт ҫеҫ тӑчӗ те сывлӑшра хумханкаласа-чӗтренсе илсе, таҫта кайса ҫухалчӗ... Эпӗ шарт сикрӗм. Йӗркеллӗ ҫывӑрса кайиччен тӗлӗкпе аташа пуҫланӑ иккен...

Тепӗр кун ирхине ирех вӑрмана тухса кайрӑмӑр. Лесник хӑш йывӑҫсене касмаллине кӑтартса тухрӗ, эпир ӗҫе пикентӗмӗр. Тӗттӗмленес чухне, пӳртре лампа ҫутма та, ӗҫ тума та май ҫук вӑхӑтра, картуна ҫитрӗмӗр. Эпӗ ҫул ҫинче хавхаланса та, ҫав вӑхӑтрах канӑҫсӑрланса та утрӑм. Мӗншӗн хавхаланнине хам аван пӗлеттӗм, мӗншӗн канӑҫсӑрланнине — пӗлместӗп...

Пӳртре пианино калани илтӗнчӗ, анчах эпир кӗрсен, лесник хӗрӗ темшӗн калама чарӑнчӗ. Кайран эпӗ, ҫывӑрма выртиччен кӑштах кӗнеке вулас тесе, сӗтел патне лартӑм, вӑл вара ман пата пырса тӑчӗ.

— Мӗн вулатӑр? — ыйтрӗ вӑл, кӗнеке ҫине пӑхса.

— Симонов пьесисем, — терӗм эпӗ.

— Пирӗн Симонов ҫукчӗ-ҫке... Килтенех илсе килнӗ-и эсир? —

— Эпӗ сирӗн кӗнекесем пуррине пӗлмен, — шкап енне пӑхса каларӑм эпӗ. — Сирӗн, ав, пысӑк библиотека иккен...

Лида чӗнмерӗ.

— Вӗренме ӑҫта каяс тетӗр-ха? — кӑшт тӑрсан ыйтрӗ вӑл.

«Ман ҫинчен ашшӗнчен ыйтса пӗлнӗ пулас, вӑтам шкул пӗтернине те пӗлет»,— шутларӑм, хам ҫавӑншӑн хӗпӗртерӗм те...

— Пединститута каясшӑн-ха та...

— О-о, педагог пулатӑр апла!—мухтаса585 каларӗ вӑл.—Ман шутпа, чи лайӑх професси.

— Камшӑн мӗнле вӗт... Мана, ак, консерватори нумай хут кӑмӑллӑрах та... Талантне тур паман...

Лида кулса илчӗ.

— Ничего, ничего, — терӗ вӑл ашшӗ пекех, — ун вырӑнне эсир лайӑх педагог пулатӑр...

Ку — пирӗн паллашу пулчӗ. Ҫывӑрма выртсан та эпӗ ун ҫинчен кӑна шухӑшласа выртрӑм, ӑсра, сисмесӗрех, хамӑр калаҫӑва тепӗр хут кала пуҫланӑ:

— Мӗн вулатӑр?

— Симонов пьесисем...

— Пирӗн Симонов ҫукчӗ-ҫке... Килтенех илсе килнӗ-и эсир? — ыйтать вӑл. Куҫӗсем хӑйӗн ӑшшӑн пӑхаҫҫӗ... — Ничего, ничего, ун вырӑнне эсир лайӑх педагог пулатӑр, — тет, кӑшт ҫеҫ кулса. Ҫавӑн чухне ун питҫӑмартисенче икӗ путӑк палӑрать, куҫхаршийӗсем ачашшӑн хускалкаласа илеҫҫӗ... Мӗнле-ха ҫав таранччен илемлӗ ҫынсем пур тӗнчере? Мӗнле килсе кӗнӗ-ха вӑл ҫак вӑрманваррине?.. Тен, ку пӗтӗмпех тӗлӗк? Сӑмахран, картунта вӑл пулман пулсан, кунта пачах та урӑхла пулатчӗ вӗт...

Мана, ҫак шухӑша аса илсен, сасартӑк питӗ кичем пек пулса кайрӗ, пӗр кӗске самантра тӗнче пуш-пушӑ та сиввӗн куранса илчӗ. Чӑнах та, Лида пулман пулсан, кунта халь мӗнле пулатчӗ-ши?

Эпӗ выртнӑ ҫӗртен тӑрса лартӑм та чылайчченех тӗттӗмелле тинкертӗм...

...Ҫак каҫран пуҫласа, Лида манпа тӑтӑшах калаҫатчӗ, хӑй яланах уҫӑ кӑмӑллӑ та хаваслӑччӗ. Каҫхине эпӗ пӗчченех пӗрене ҫине тухса ларатtӑм, анчах хамӑр, тепле майпа, яланах виҫҫӗн пулаттӑмӑр: эпӗ, Лида тата Лидӑн шӑллӗ. Вӑл шӑллӗне питӗ вӑрҫтарма юрататчӗ. Лешӗ, хӑйне ҫамрӑклах мӑн ҫын пек тыткалама тӑрӑшакансkер, уншӑн вара тем пекех ҫиленетчӗ. Лида ахӑлтатса кулатчӗ. «Эх, эси-ир!» — тетчӗ вӑл, пирӗн ҫине пӑхса. Ҫакӑ мана кӳрентеретчӗ, тарӑхтаратчӗ: ҫук, Лида ман ҫине те хӑйӗн шӑллӗ ҫине пӑхнӑ пек ҫеҫ пӑхать... Эпӗ ним тума пӗлмесӗр ларатtӑм, хама-хам кураймин пуласси патнех ҫитеттӗм. Лида вара, те ҫавна асӑрхаса, те унпа та мар, сасартӑк лӑпланатчӗ те манпа калаҫма пуҫлатчӗ. Эпӗ мӗнле кӗнекесем вулани ҫинчен, мӗнпе ытларах интересленни ҫинчен ыйтса пӗлетчӗ вӑл, анчах хам унпа калаҫма та вӑтанаттӑм, сӑмахсем темле, ҫыхӑнусӑр тухатчӗҫ...

Пӗррехинче эпир унпа иккӗн ҫеҫ лартӑмӑр. Тӳпе тӑрӑ та кӑвакчӗ, вӗтӗ ҫӑлтӑрсем мӗлт-мӗлт туса йӑлкӑшатчӗҫ, вӑрман тӑрринчен уйӑх ҫӗкленетчӗ. Картун таврашӗнчи хыр пӗренисем ҫав ҫутӑпа темле, ирӗлнӗ пек, ҫемҫен йӑлтӑртатса выртатчӗҫ.

Лида ман ҫуммарах куҫса ларчӗ, унӑн хулӗ ман хул ҫумне кӑшт ҫеҫ сӗртӗнсе илнине туйрӑм... Ним сӑмах тупса калаҫма та пӗлеймерӗм. Вӑл ман ҫине кулса пӑхнӑн туйӑнчӗ, анчах хам — пӑхма хӑяймарӑм.

— Эсир темшӗн калаҫма юратсах каймастӑр? — терӗ Лида. — Хӑвӑр педагог пуласшӑн, анчах калаҫмастӑр...

Эпӗ ҫакна хирӗҫ тӑруках ним чӗнме те пӗлмерӗм, кӑшт тӑрсан кӑна ҫапла каласа ятӑм.

— Мӗн ҫинчен калаҫас-ха ман сирӗнпе?..

— Ак ӗнтӗ! Тем ҫинчен те калаҫма пулать вӗт-ха. Сӑмахран, кушаксем ҫинчен... — Лида хӑй сӑмахӗнчен хӑй кулса илчӗ те унтан ҫапла ӑнлантарса пачӗ. — Пирӗн хулара пӗр ҫамрӑк поэт пур, халь институтра кӑна вӗренет-ха, вӑл вара манпа чухне яланах кушаксем ҫинчен калаҫать...

Эпӗ кулам пекки турӑм, анчах малалла мӗн калаҫмаллине ҫаплах шыраса тупаймарӑм...

— Ҫук, ҫапах эсир калаҫма юратмастӑр, — терӗ вӑл, ҫӗрелле пӑхса. Унтан сасартӑк ман еннелле ҫаврӑнчӗ.

— Калӑр-ха, мӗн ҫинчен шухӑшлатӑр эсир? — ыйтрӗ вӑл.

— Ним ҫинчен те...

— Ун пек пулма пултараймасть! Ҫын, чӗнмесӗр тӑнӑ чухне, мӗн ҫинчен те пулин шухӑшлатех.

— Мана апла вăл шутран кăларса пăрахма тивет пуль; эпĕ халь ак, ним çинчен те шухăшламастăп.

Лида чĕнмерĕ.

Пирĕн çывăхра пĕр çара çерçи урлă-пирлĕ вĕçкелесе çӳреме тытăнчĕ, картишĕнче пусă тараси чĕриклетсе илчĕ. Картун умĕнчен, тикĕтлĕ кустăрмисемпе лăчăртатса, икĕ вут лавĕ иртсе кайрĕ...

— Çав йывăççем мĕне аса илтереççĕ? — сасартăк ыйтрĕ Лида.

— Хăшĕсем?

— Ав çав икĕ тополь, — пахча енне кăтартрĕ вăл. Эпĕ пахча вĕçĕнче ӳсекен топольсем çине пăхрăм та кăртах сикнĕ пек пултăм. Пĕр йывăçĕ лутрарах, тепри, ун çумĕнчи, лутра йывăçĕ çине кукăрăлсарах ӳснĕ, тăррисем пĕрлешнĕ пекех тăраççĕ...

— Ну, мĕне аса илтереççĕ?

Хам мĕн шутланине каласшăнчĕ эпĕ, анчах çавăнтах, темшĕн иккĕленсе, именсе кайрăм.

— Пĕлместĕп, — тесе çеç хутăм вара.

— Мана вĕсем яланах пĕр карчăкпа старике аса илтереççĕ... Карчăкĕ тем калана та, старикĕ, хăлхи илтмен пирки, пуçне карчăкĕ патнелле пĕкнĕ... Питĕ шеллетĕп эп старикне!..

«Суятăн!» — каласшăнчĕ эпĕ, анчах калама пултараймарăм. Тепĕр çын ман вырăнта пулсан, Лидăна халь мĕн калассине те аванах туйса тăраттăм, анчах хам çав «тепĕр çын» вырăнĕнче пулма ниепле те пултараймарăм... Юнашар ларнăранпа пĕрремĕш хут Лида çине пуçа çĕклесе пăхрăм. Вăл темшĕн салхуллă пек туйăнса кайрĕ, çаплах çав икĕ тополь çинелле пăхса ларчĕ... Ăçтан килсе ӳснĕ вĕсем кунта, кам лартнă вĕсене?

— Лида, килĕр-ха кунта! — илтĕнчĕ шăп çак вăхăтра картун енчен. Лесник иккен: пуçне чӳречерен кăларнă та пире хăй патне чĕнет.

— Юрлаттарасшăн ĕнтĕ, — кулса каларĕ Лида. — Кăшт ĕçсен, вăл вара манран яланах юрлама ыйтать...

Эпĕ ура çине тăтăм. Лида та тăрса кĕпине аллисемпе якаткаласа илчĕ. Унтан, темшĕн ман çине питĕ хавассăн пăхса, çапла ыйтрĕ:

— Сире хăш композитор ытларах кăмăла каять?

— Эпĕ «Кĕтӳç» юрра юрататăп...

— Воробьевăнне-и?

— Çавна... «Кĕтӳç ларать сăрт çинче»...

Эпир пӳрте кĕтĕмĕр.

— Юрласа памалла-и-ха?

— Кăмăл тусамччĕ. Хăнасем те ак итлесе пăхасшăн, — хĕрĕнкĕ куçĕсемпе Лида çине каçару ыйтнă пек пăхрĕ лесник.

Лида пианино патне пычĕ.

— Кĕтӳç çинчен юрлатăп, — терĕ вăл, ман çине пăхса, унтан

пукан ҫине ларчӗ. Тепӗр самантранах пӳртре илемлӗ, ҫӑмӑл юрӑ янӑраса та кайрӗ.

Кӗтӳҫ ларать сӑрт ҫинче те,
Кӗтӳҫ ларать сӑрт ҫинче,
Хӗвел ҫутти айӗнче.
Кӗтӳҫ калать шӑхличне,
Шӑрантарать юррине.

Мана, вӑл юрланине итлесе тӑнӑ май, ҫав тери пысӑк хаваслӑх ярса илчӗ. Юрӑ вӗҫленсен, эпӗ сисмесӗрех ҫапла каласа хутӑм:

— Тата юрлӑр-ха мӗн те пулсан!..

— Мӗн юрлас-ши? — ыйтрӗ Лида кулса.

— Лешне... Антонида юррине юрла-ха эс, — ыйтрӗ лесник.

— Мӗнех, юрлӑпӑр... Анчах вӑл кун пек хаваслах мар ӗнтӗ, — терӗ Лида, каллех ман ҫине пӑхса. Унтан пукан ҫинче тӳрленерех ларчӗ те пӗр кӗске самант таҫта айккинелле пӑхса тӑчӗ...

...Черченкӗ пӳрнесем, клавишсем тӑрӑх чупса, салхуллӑ та ачаш сасӑсем кӑларчӗҫ, пӳртре сасартӑк юрӑ пуҫланчӗ.

Не о том скорблю, подруженьки,
Я горюю не о том,
Что мне жалко доли девичьей,
Что оставлю отчий дом...

Эпӗ Лида ҫинчен пӗр самант та куҫа илеймерӗм. Пичӗ ун ҫав вӑхӑтра салхуллӑраххӑн курӑнатчӗ, куҫхаршийӗсем кӑшт ҫеҫ сисӗнмелле ачашшӑн хускалкаласа илетчӗҫ. Хама ун чухне мӗнле туйнине эпӗ... каласа пама пултараймастӑп, анчах унӑн чун-чӗререн шӑранса тухакан ҫепӗҫ те уҫӑ сасси халӗ те ман асӑмрах янӑраса тӑрать... Малтанхи куплетне юрласа пӗтерсен, вӑл пӗр сыпӑк пианинӑпа каларӗ, унтан каллех юрлама пуҫларӗ.

Нас постигло лютое горе,
Убила черная судьба:
Были враги у нас,
Взяли отца сейчас...

Пианино умӗнче таҫтан вӗҫсе аннӑ акӑш пекех ларатчӗ вӑл, тин ҫеҫ ҫуралса сарӑлнӑ мӑкӑнь ҫеҫки пек, ҫамрӑк та тасаччӗ... Пӗчӗк пӳрнисем клавишсем тӑрӑх хӑвӑрт чупатчӗҫ, куҫӗсем ҫаплах салхуллӑраххӑн пӑхатчӗҫ... Ҫав вӑхӑтра манӑн ӑна, хыттӑн-хыттӑн ыталаса илсе, унӑн аллисене, пӗчӗк пӳрнисене, питне хӗрӳллӗн-хӗрӳллӗн чуптӑвас килчӗ... Кӑкӑрта манӑн чӗрем тытса чармалла мар тапатчӗ... Эпӗ текех ун умӗнче чӑтса тӑма пултараймарӑм, мана тӗлӗкри пек туйӑнса кайрӗ... Хам мӗн тунине хам пӗлмесӗр, эпӗ алӑк еннелле утрӑм. Алӑка хупсанах юрӑ чарӑннине илтрӗм, вара, темрен хӑраса кайса, вӑрман еннелле виркӗнтӗм... Йӗри-тавра сӗм-тӗттӗм пулса кайрӗ, чӗрене темскер хыттӑн пӑчӑртаса илчӗ...

...Каялла килнĕ çĕре пӳртре çутă çукчĕ. Асăрханса чӳречесем умĕнчен иртрĕм. Лида пӳлĕмĕнче чĕнтĕрлĕ карри витĕр шурă мĕлке курăнса кайнă пек туйăнчĕ — тепĕр хут пăхма хăяймарăм. Çук, мана туйăнчĕ кăна пулмалла...

— Ăçта çӳретĕн эс? — пăшăлтатса ыйтрĕ пичче. Атте сăмсипе кичеммĕн шăхăрттарса çывăратчĕ.

— Ниçта та, — терĕм те хăвăртрах çывăрнă пек тума тăрăшрăм. Пичче чĕнмерĕ. Анчах выртсан-выртсан тăрса ларчĕ, шăрпăкпа пирус хыпаласа тупрĕ.

— Тургмастăн-и? — каллех пăшăлтатса ыйтрĕ вăл.

«Пушар кăларатăн ак!» — каласшăнчĕ эп, анчах чĕнмерĕм. Пичче, шăрпăк чĕртсе, хăй тĕллĕн шăппăн кулса илчĕ...

Тепĕр кун ирех вăрмана тухса кайрăмăр. Каçхине килсен, апат çирĕмĕр те, тӳрех аслăк çине хăпарса выртрăм. Лида унччченхи пекех çăмăл çӳретчĕ, çавă ман чĕрере пушшех те тарăху çĕклерĕ... Анчах иртнĕ каç та сахал çывăрнипе тата кунĕпех ĕçлесе ывăннăскер, эпĕ выртсанах çывăрса кайнă...

Ирхине мана темскер хыттăн шатăртатни вăратса ячĕ. Вăрманта — аслатиллĕ çумăр çăвать... Аттепе пичче аслăк хĕрринче табак туртса ларaççĕ.

Апат çисен эпĕ «Новый мир» журнал илтĕм те картун çурчĕ умне тухса лартăм. Çумăр çаплах чашлаттарса çăвать, аслати кăна хуллентерех кĕмсĕртетет. Пӳрт карнизĕ айĕнче типĕ, çумăр пĕрре те тивмест. Эпĕ, хăмаран тунă сак çине ларса, журнал вулама тытăнтăм. Ăнлани-ăнланмиех виç-тăватă страница вуланăччĕ — кĕçналăк уçăлнине илтрĕм. Куçа хам темшĕн çаплах кĕнеке çинчен илмерĕм.

— Мĕн вулатăр? — илтрĕм эпĕ Лида сассине çумрах. Унăн пĕчĕк урисемпе плащ аркине куртăм.

— «Новый мир», — терĕм, журнал листисене уçкаласа.

Лида чĕнмерĕ. Эпĕ çаплах страницăсене уçкаларăм.

— Мĕнле-ха эсир, мана вырăн та сĕнместĕр? — ыйтрĕ вăл юлашкинчен. — Е эпĕ кансĕрлетĕп-и?

Эпĕ сак хĕррине рех куçса лартăм.

Вăл, плащ аркисене пуçтарса, ман çумма ларчĕ.

Сасартăк вăрманта хĕвел çутатса ячĕ. Сывлăшра чĕркĕмĕл пек тумламсем йăлтăртатрĕç, аслати аякра кĕмсĕртетрĕ...

— Акă çумăр та иртсе кайрĕ,—хавассăн карĕ Лида.

Эпĕ те хама хавăслă туйса кайрăм, ешĕл вăрман çине, хĕвел çуттинче çаплах йăлтăртатакан шултра тумламсем çине хĕпĕртесе пăхрăм, вăрманта кайăксем чĕвĕлтете пуçларĕç...

— Дож-дик, дож-дик,
Дож-дик, дож-дик! —

юрласа илчĕ Лида.

Унтан сасартăк ман енне çаврăнчĕ.

— Атя çырла татма каятпăр! — терĕ вăл, куçĕсене çиçтерсе.

— Пирĕн ĕçе каймалла пулать пуль...

— Эп сире инçете илсе каймастăп! Çывăхрах пĕр вырăн пур, хăмла çырли хуть те витрипех тат!..

— Кайса килер апла...

Лида пӳрте кĕрсе кайрĕ те самантрах пĕчĕк кунтăк йăтса тухрĕ. Вара эпир вăрманалла кĕрсе кайрăмăр. Çулпа пĕр икçĕр метр пек утсан, Лида айккинелле пăрăнчĕ. Часах, чĕркуççи таран йĕп-йĕпе пулса, пĕр пĕчĕк уçланкăна тухрăмăр.

— Ак, çитрĕмĕр те! — терĕ Лида, ман енне çаврăнса. — Куна «Кантрашка хăртни» теççĕ, ĕлĕк çаран валли юри хăварнă, тет... Пăхăр, мĕн чухлĕ çырла! — кăтартрĕ вăл вĕлтĕренлĕ-хутăшлă çырла аврисем çине.

— Анчах, тем, çырлисене курмастăп-ха эп...

— Чим-ха, кăшт шаларах кĕрер!..

Вăл, йĕпенесрен хăрамасăрах, çырла аврисем ăшне кĕрсе кайрĕ, ун хыççăн эпĕ те асăрханса кĕтĕм. Çырли, эпĕ каланă пекех, питĕ сахал пулчĕ.

— Татса пĕтернĕ!—терĕ Лида, çырласене пĕрерĕн-пĕрерĕн кунтăка ярса. Эпĕ алăсене темиçе хут та вĕлтĕренпе вĕтелентерсе пĕтертĕм, вĕсем, вĕри шывпа пĕçертнĕ пекех, сăрăлтата пуçларĕç. Эпир часах каялла тухрăмăр.

— И-их! — терĕ Лида, хăйĕн пилĕк таран лачкам йĕпеннĕ çӳхе плащ аркине пӳрне вĕçĕсемпе шăлса, унтан ман çине пăхрĕ те ача пек кулса ячĕ.

— Ăçта шыва анса кайнă эсир?!

— Хăвăр ăçта анса кайнă-ха?

Вăл тата хытăраххăн кулса ячĕ.

— Ну-и, çирĕмĕр те çырла-а!..

— Тăраниччченех...

— Ан çиленĕр ĕнтĕ, эп сире хам татнине паратăп, — вăл кунтăкне чалăштарса кăтартрĕ.— Ав мĕн чухлĕ татнă эп! Акă, илĕр.

Эпĕ илесшĕн пулмарăм.

— Тытăр, атту çиленетĕп!

Эпĕ вара алла ун енне тăсрăм. Лида сасартăках хытса тăчĕ.

— Мĕн туса хунă эсир? — хăраса ыйтрĕ вăл. Ясмăк пек хăпаланса тухнă алла пӳрнипе сăтăркаласа пăхрĕ. — Ыратать-и?

— Çук...

— Суятăр!

— Эпĕ нихçан та суйса курман.

— Каллех суятăр!

— Мĕншĕн?

— Мĕншĕн тесен — суятăр! — çаплах çиçсе каларĕ вăл. Унăн пичĕ çинче çутă тумламсем йăлтăртатса тăратчĕç, йĕпеннĕ çÿçĕн пĕр пайăрки косынка айĕнчен çамки çинелле шуса аннăччĕ... Вăл ман çине пĕр самант темле пысăк япала калас пек пăхса тăчĕ, унтан кĕтмен çĕртен çапла ыйтрĕ:

— Калăр-ха, мĕншĕн эсир Глинкăна çавăн пекех юратмастăр?

— Мĕн пирки?..

— Виçĕмкун каç ăна итлесшĕн те пулмарăр-çке...

Манăн пит сасартăк пĕçерсе кайнине туйрăм эп, анчах хам самантрах çапла ответлесе хутăм:

— Çук, эпĕ Глинкăна юрататăп, анчах эсир... начар юрларăр! Çавăнпа тухса кайрăм та...

— Чăнах-и?—ман сăмахсенчен тĕлĕнсе, куçхаршийĕсене хăпартса илчĕ Лида.

— Çапла...

— Анчах ман çинчен консерваторири профессорсем пачах та урăхла шутлаççĕ-çке?

— Пĕлместĕп, анчах ман кăмăла каймарĕ...

Хам темшĕн çапла калаçнине хам та пĕлмерĕм эп, мана аван мар туйăнса кайрĕ. Лида çине пăхрăм та, унăн пичĕ çинче çăмăл кулă пытанса тăнине асăрхарăм, куçĕсем те çавăн пекех вăрттăн кулса пăхатчĕç... Эпĕ вара çапла каларăм:

— Эсир ан çиленĕр, Лида, анчах эп хак пани сирĕншĕн ниме те тăмасть вĕт. Ун вырăнне эп сиртен... пĕр япала ыйтасшăнччĕ...

— Мĕнле япала?

— Эсир мана пианинăпа калама пĕр-пĕр юрă вĕрентмĕр-ши?

— Пианинăпа? — тĕлĕнсе каларĕ вăл. — Анчах эсир нотăсем пĕлместĕр-çке-ха?

— Эсир нотăсăрах вĕрентĕр...

Лида пуçне сулкаласа илчĕ:

— Темĕн, пултарайăп-ши эп?..

— Эсир тытăнса пăхăр-ха...

— Мĕнех, тытăнса пăхар. Ĕçлеме халех каймастăр вĕт-ха?

— Тавралăх типмесĕр каймастпăр пуль.

— Апла пулсан, васкар...

Эпир картун еннелле утрăмăр. Пÿрте кĕрсен, Лида урăх тумтир тăхăнса тухрĕ те пианино умне ларчĕ.

— Мĕн вĕрентес-ха ман сире? — ыйтрĕ вăл, пианино виттине уçса. — Вальссем ытла та йывăр пуль ĕнтĕ...

— Эсир çăмăлраххине вĕрентĕр.

Вăл пÿрнисемпе клавишсем тăрăх сăтăркаласа илчĕ.

— Тен, Чайковскирен мĕн те пулин... «Пĕчĕк акăшсен ташшине» пĕлетĕр-и?

— Пĕлетĕп, радиопа час-часах итленĕ.

— Апла, çавна тытăнса пăхар. Малтан хам каласа паратăп, эсир лайăх итлесе тăрăр.

Вăл пианино калама тытăнчĕ. Эпĕ унăн аллисем çине куç сиктермесĕр пăхрăм.

— Халь сыпăкăн-сыпăкăн вĕренĕпĕр. Пăхса тăрăр, калатăп. — Вăл пĕр сыпăк каларĕ. — Лайăхрах пăхăр, тепĕр хут калатăп... Ну, халь эсир ларăр... Аван, аван... Кунта, ак, тĕрĕс пусмастăр. Пăхса ларăр-ха,— вăл ура çинчех тепĕр хут кăтартса пачĕ. Хулпуççи çумне унăн тăп-тăп кăкăрĕсем перĕннине туйрăм...—Ну, тепĕр хут калăр-ха!

Эпĕ тĕрĕсех каласа патăм.

— Аван! Малалла кайăпăр,—вăл каллех ура çинченех каласа пачĕ.

Хам та тĕлĕнетĕп, анчах çав кĕвве ун чухне эпĕ самаях хăвăрт тĕшмĕртсе çитернĕччĕ.

— Сирĕн сасă туйăмĕ аван аталаннă! — терĕ Лида. — Тен, эсир юрлама та пултаратăр?

— Çу-ук! — терĕм эпĕ кулса.

Манăн сасă, чăнах та, начарах марччĕ, эпĕ шкулта вĕреннĕ чухне те вечерсенче час-часах юрлаттăм, анчах ун çинчен, темшĕн, Лидăна каламарăм.

— Эпĕ хам юрламастăп, анчах музыкăна питĕ юрататăп! — терĕм çеç.

Вăрмана çав кун хаваслă туйăмпа утрăм. Хăлхара кунĕпех пĕр илемлĕ кĕвĕ янăраса тăчĕ, хамăн калама та çук ĕçлес килет. Çурта пек тӳрĕ хырсем епле йăванни çине хĕпĕртесе пăхрăм, йăвантарнă хыр турачĕсене çивчĕ пуртăпа çăмăллăн касрăм...

— Тата икĕ кунтан киле каятпăр,— терĕ атте. Манăн чĕрем вара картах сиксе илчĕ... Каçхине эпĕ пачах та çывăраймарăм. Аттепе пичче çывăрса кайсан, аслăк çинчен антăм та вăрманта мĕн ыйăничченех утса çӳрерĕм. Каçхи шăплăхра шĕкĕсем кивелнĕ хыр перенисене шăтăр-шăтăр тутарса çиетчĕç, çавăн пекех манăн чĕрене те йывăр-йывăр шухăшсем асаплăн кăшларĕç.

«Икĕ кун... Ун хыççăн мĕнле пулать вара, кайран мĕн пулать?»— Çак ыйту çинче кăна пулчĕ ман шухăш, çав ыйту кăна ман пуçа канăç памарĕ. Малалла мĕнле пулмаллине эпĕ пĕлмерĕм, Лидăна хамăн юрату çинчен калама пултарни пирки шухăшлаймарăм. Ку маншăн çутçанталăкра пулма пултарайман япала пекех туйăннă...

...Тата икĕ кун пурăнтăмăр вăрманта—икĕ кун асаплантăм эпĕ. Хам Лида умне курăнма та, унпа калаçма та хăраттăм. Яланах хĕрелсе, айккинелле пăхаттăм, манăн шухăшсене вăл ан систĕр, теттĕм. Çĕрле вара ман вырăн—сĕм вăрманччĕ, юлташăм—чĕмсĕр тĕнчеччĕ... Никампа калаçмасăр çӳренипе тутасем типсе каятчĕç. Пуçра темле шухăш та

пăтранать, хам шутпа — тем те тăватăп... Акă эпĕ кунта аякран Лида чӳречи çине пăхса тăратăп, вăл тухассине кĕтетĕп... Сасартăк чӳрече умĕнче шурă мĕлке акăш пек курăнса каять. Эпĕ сисмесĕрех ун патнелле утма тытăнатăп, анчах шурă акăш — каллех курăнми пулать. Эпĕ пуçа усатăп... Анчах та мĕскер ку? Кам ерипен кĕçналăка уçса пӳрт умне тухса тăрать?.. Вăл сасартăк хăвăрт-хăвăрт ман еннелле утма тытăнать, эпĕ—хирĕç ыткăнатăп...

— Лида!..— тетĕп эпĕ, унăн умĕнче хытса тăрса. Вăл хăвăрт-хăвăрт сывлать, ман çине вăтанса пăхать. Эпĕ чăтаймастăп, ăна хĕрӳллĕн çупăрласа тытатăп та, сăмах чĕнме памасăр, вутлă-çулăмлă сăмахсем калатăп, ун аллисене, питне кăвар пек тутасемпе чуптăватăп... Вăл юлашкинчен ман çавăра ачашшăн аллипе хуплать.

— Шăплан! Нимĕн те ан кала!—тет вăл йăваш-йăваш сасăпа.— Нимĕн те ан кала, эпĕ сана унсăр та ăнланатăп... Пĕлетĕп, йывăр пулнă сана, йывăр... Ытла та çамрăк пулнипе эсĕ ху нихçан та калайман пулăттăн, эпĕ ак — хамах тухрăм!..

— Лида!.. Лидочка!.. Эпĕ сана юрататăп!.. Мĕнле пурăнас ман сансăрăн?..

...Анчах та Лида эп мĕнле çуннине нимĕн те пĕлмест... Вăл хальман çинчен пачах та шутламасăр, тутлă ыйхăпа çывăрать. Эпĕ те ак вăрманта сывлăм ашса пĕчченех çӳретĕп... Çӳресен-çӳресен ывăнса çитетĕп те каллех аслăк çине хăпарса выртатăп... Анчах выртсан та, тăрсан та — пурпĕрех!..

...Кайнă чухне эпĕ ун патĕнче юлашки хут «Пĕчĕк акăшсен ташшине» каларăм. Вăл ман çумрах аллине пианино çине хурса тăратчĕ, эпĕ мĕнле каланине сăнатчĕ...

— Отлично! Эсир ĕлкĕрсе пыракан ученик! — терĕ вăл, эп калама чарăнсан. Аттесем лашана урама кăларнăччĕ ĕнтĕ, лесник вĕсемпе сывпуллашса, хавассăн калаçатчĕ.

Эпĕ Лида çине юлашки хут пăхса илтĕм те тухма хатĕрлентĕм.

— Ну, сывă пулăр!—терĕ вăл, яланхи пекех йăвашшăн кулса.

— Сывă пулăр!—терĕм эп куçпа çеç.—Ĕмĕрлĕхех сывă пулăр!..

Вăл ман çине сасартăк темле чăрр! пăхса илчĕ, куçсем шывлана пуçланине асăрхарĕ пулас... Эпĕ вара хăвăртрах алăкран тухрăм...

Ман юлташ калама чарăнчĕ, ерипен ура çине тăчĕ те уçă чӳрече патне пычĕ. Варкăш çил чӳрече каррисене хускаткаларĕ, унăн çӳç пĕрчисемпе вылярĕ... Тепĕр самантран вăл, каллех хăй вырăнне вырнаçса, малалла кала пуçларĕ.

Çавăн хыççăн килте мана пĕр вăхăт хушши нимĕн те интереслентермерĕ, пурнăç пĕтĕмпех тĕлĕк пек туйăнатчĕ... Пĕр эрне никампа чĕнмесĕр çӳренĕ пирки манăн сасă йăлтах пĕтсе ларнăччĕ, сăн-сăпат— чирленĕ чухнехи майлăччĕ... Мĕн çинчен шухăшланă эп ун чухне—ăна халь астумастăп, анчах малалла текех чăтса пурăнма пултараймарăм,

пĕр кунхине велосипед çине лартăм та картун енне тухса вĕçтертĕм. Лида эпĕ пырас умĕн шăп пĕр кун малтан килĕнчен тухса кайнă... Тепĕр кунне вара эпĕ те, чăматан йăтса, аслă çул çине тухрăм...

...Маншăн çĕнĕ пурнăç пуçланчĕ... Чĕрере яланах пĕр кĕвĕ янăраса тăратчĕ—«Пĕчĕк акăшсен ташши», умра яланах пĕр çын сăнарĕччĕ—манран аякра-аякра пурăнакан хĕр сăнарĕ... Анчах эпĕ ĕнтĕ халь хама малтанхи пек чирлĕ туймастăп, яланах хаваслă та темле халиччен пĕлменле çăмăллăччĕ... Çутçанталăкри кашни япалах: Атăл шавлани-и вăл, ăшă çил йывăç-куракĕсене ăпкăн хумхатни-и, завод трубисем ирсерен кăшкăртса яни-и е тăрă тӳпере çутă уйăх канлĕн шуса тухни — пурте, пурте манăн чĕрере илемлĕ кĕвĕ-çемĕсем çуратнă пекчĕ... Манăн çав кĕвĕсене хут çине çырса хурас килетчĕ, эпĕ вара, институтра часчасах рояль умне ларса, хам пĕлекен пĕр кĕвве калаттăм — «Пĕчĕк акăшсен ташши», ун урлă чĕрере тăвăл пек çĕкленсе тухакан кăмăл-туйăма ăплантарма тăрăшаттăм... Çапла эпĕ хам сисмесĕрех ытти кĕвĕсене вĕрене пуçларăм. Каярахпа хамăр хулари пĕр çамрăк композиторпа паллашрăм та ун патне музыка çырулăхне, музыка историне вĕренме çӳрерĕм. Эпир унпа çывăх туссем пулса кайрăмăр, вăл мана тăрăшсах вĕрентрĕ. Ăна эпĕ нихçан та манас çук, унăн умĕнче—ĕмĕрлĕхех парăмра: вăл пулăшнипе эпĕ пурнăç çине те урăхларах пăха пуçларăм, тата ман умра—чăн-чăн музыка тĕнчи уçăлчĕ... Пединститут пĕтернĕ çĕре вара эпĕ начарах мар музыкантчĕ, манăн хăшпĕр кĕвĕсене радиопа та паратчĕç... Пурте манра талант пур, терĕç, ăна сая ямалла мар, терĕç... Эпĕ вара — консерватори студенчĕ пулса тăтăм.

Вăл калама чарăнчĕ, анчах унăн пичĕ çинче çаплах тарăн шухăш йĕрĕ палăрса тăчĕ. Çав шухăш мĕн çинчен иккенне эпĕ лайăх ăнланатăм, вăл хăй те вара, эпĕ мĕн пĕлесшĕн пулнине сиснĕ пекех, хăй калавне çапла вĕçлерĕ.

— Вăл ĕнтĕ халь качча тухнă... «Тахçан хăйсем патĕнче çичĕ кун хушши пурăннă айван та хăюсăр ачана пĕрре те пулин аса илнĕ-ши вăл?»—тесе те шухăшламастăп ун çинчен, анчах пĕлтĕр, кунта килес умĕн, мана кăштах ялта пурăнма тĕл килчĕ те, эпĕ çав картуна çуранах кайса килтĕм...

Унта пачах та урăхла сăн-сăпатчĕ. Стенасем çинчен ăшĕсене чӳпĕк тултарнă тĕрлĕрен кайăк кĕлеткисем хускалмасăр пăхса тăратчĕç, пӳрт урайĕ çӳп-çаплăччĕ...

Курпунланарах панă, пысăк сухаллă лесник, хăйĕн мĕнпур пурнăçне вăрмантах ирттерсе янăскер, мана хĕрлĕхенпе, пылпа вĕри чей ĕçтерчĕ, хăй çинчен каласа пачĕ. Ун хыççăн эпĕ Лидăпа çырлана кайнă уçланкăра пултăм, пĕр йывăç çырла татса çирĕм...

Нумай асаилӳсем çуралчĕç пуçра, нумай шухăшлаттарчĕ çак вырăн... Чĕрере каллех пĕр илемлĕ кĕвĕ янăраса тухрĕ — «Пĕчĕк акăшсен ташши». Çак кĕвĕ маншăн, чĕрене вăл чылай чух йывăррăн

хĕссе илет пулин те, яланлăхах чи çепĕç те чи хаклă кĕвĕ пулса юлчĕ, мĕншĕн тесен унпа эпĕ çĕнĕ çул çине тухнă тата вăлах — манăн малтанхи юрату пулнă... Акă мĕншĕн ĕнтĕ, рояль умне ларсан, эпĕ чи малтан çав кĕвве калатăп...

---

## ПУРНĂÇ ПУÇЛАМĂШЕ

«Тулта çиллĕ çанталăкчĕ. Пирĕн пӳрт çумĕнчи ватă çĕмĕрт çеçкисем çав кун пĕтĕмпех вĕçсе пĕтрĕç, урамсенче хура асфальт тусанĕ çĕкленнĕччĕ...

Эпĕ, яланхи пекех ӳсĕр, тилĕрсе кайнăскер, алăк патĕнче чарăнса тăрса, сан çине пăхрăм. Эсĕ тĕпелте, пахча енчи чӳрече патĕнче, сĕрме купăспа темле кĕвĕ калаттăн. Купăс хĕлĕхĕсем салхуллăн йĕретчĕç, санăн вылявунта ӳпкелешӳ, кӳренӳ, тарăху палăрать... Тулта ĕнтĕ каç пулса килет, анма пуçланă хĕвелĕн çăра та хĕрлĕ çути пӳлĕме кичеммĕн çутатать. Юлашкинчен эсĕ калама чарăнтăн та, ассăн сывласа, ман çине пăхрăн, анчах нимĕн те чĕнмерĕн. Эпĕ вара, тусанланса, хуралса пĕтнĕскер, сан патна утса пытăм.

— Эпĕ текех кун пек... пултараймастăп. Эпĕ сан патăнтан паян каятăп,— терĕн эсĕ шăппăн.

Эпĕ темиçе утăм каялла чакрăм та, сана мĕлке пек тĕссĕррĕн курса илтĕм.

...Çав кун эсĕ, чăнах та, ман патăмран ĕмĕрлĕхех кайрăн, тăвата çул пĕрле пурăннă хыççăн... Тепĕр икĕ сехетрен эпĕ урăлтăм, тĕттĕм пӳлĕмре чылайччен лартăм. Кĕтесре таçта шăрчăк чĕриклететчĕ, стена çумĕнчи сехет ывăнма пĕлмесĕр тиклетет: тик-так, тикăл-так... Эпĕ, пуçăмран такам пуç мимине кăларса илнĕ пекех, ним çинчен те шухăшлама пултараймарăм: хамăн пурнăç çинчен те, сынсенни çинчен те. Кăшт тăрсан, тула тухрăм та пӳрт умĕнче утса çӳрерĕм. Кӳршĕсен пысăк çăмламас кушакки пирĕн пӳрт карнизĕ патĕнче ларатчĕ: унта — кăвакарчăн йăви. Кăвакарчăнĕсем иккĕш те кăвакчĕ, анчах вĕсене те çав каç çăмламас кушак яланлăхах хăратса ячĕ. Вĕсем кайран текех килмерĕç, кушакки вара çаплах карниз патне пыра-пыра каятчĕ. Çавă мана — чăтма çук тарăхтаратчĕ...

...Эсĕ ман патăмран кайсан, эпĕ икĕ эрне ытла ниçта тухмасăр пурăнтăм. Юлашкинчен чăтаймарăм — каллех ĕçсе ӳсĕрĕлтĕм те, ниçта кайма пĕлмен енне, Атăл хĕрринелле утрăм. Сасартăк урамра сана куртăм. Эсĕ пĕччен марччĕ, санпа пĕрле филармони артисчĕ Сергей Ванькин пыратчĕ. Унăн куçĕсем, спекулянт куçĕсем евĕр, йăлтăртатса, çулланса кайнă пек курăнчĕç мана. Вăл мĕн шухăшланине, мĕне ĕмĕтленнине эпĕ тӳрех сиссе илтĕм, темшĕн мана карниз

патĕнче ларакан çăмламас кушак аса килчĕ... Ванькин темĕнле хаваслă япала çинчен калаçатчĕ, хăй çавна май час-часах санăн сылтăм алтунинчен çемçе аллипе çепĕççĕн тытса илет... Чăннипе филармонири чи пултарусăр артист пулин те, çав çын хăйне талантлă тесе шутлама хăять. Пултарусăр, талантсăр çынсене, вĕсен шутне хам та кĕретĕп пулин те, эпĕ юлашки вăхăтра чăтма пултараймастăп, манăн, вĕсене курсан, темшĕн сăлтавсăрах çилĕ тăвăлса килетчĕ. Эсĕ, пурте хисеплекен, пурте йышăннă артистка, хăвăнпа çавăн пек çын çавнашкал калаçса пынине лăпкăн итлесе утаттăн, вăл кăна та мар, пĕр хутчен, хăвăн салхулăхна айккине сирсе, кулса та илтĕн... Эсĕ мана асăрхамарăн, эпĕ—сирĕн хыççăн утрăм. Кăкărта манăн пĕçерсе, тарăхупа кӳренӳ вучĕ сарăлчĕ, эсĕ çак самантра ют арçынпа утнишĕн мар, хамăн пурнăç çак тарана аталанса çитме пултарнăшăн, хамăн пурнăçа хамах çак тарана çити анса ларма май панăшăн...

Атăл хĕрринчи икĕ хутлă çурт патне çитсен, эсир чарăнтăр. Ванькин çаплах сан умăнта тăчĕ, эсĕ кĕме тытăнсан, сасартăк тем аса илнĕ пек пулчĕ те, сан çине калама çук шеллĕн, яланах çын асапне туйса пурăнакан çын евĕр пăхрĕ. Эсир урăх япала çинчен калаçа пуçларăр—санăн çемьери инкекӳ çинчен... Ванькинăн унччен çулланса тăракан куçĕсем халь хаярланнă пек, типпĕн курăнчĕç — вăл ман ята асăнчĕ. Эпĕ пăрăнса каясшăнччĕ, анчах пултараймарăм.

— Хăй хăрса пынă май, сирĕн умăрти пурнăç чечекĕсене те таптаса, хăртса пурăннă вăл,—илтрĕм эпĕ унăн сăмахĕсене.

Эсĕ чĕнмерĕн. Ванькин тата çапла каларĕ:

— Пурнăç каяшĕнчен пурнăç чечекĕ чĕрĕлсе çуралнине никам та ĕненмĕ...

Эсĕ айккинелле пăхрăн, санăн унпа килĕшес килмерĕ пулас...

— Вăл ирĕксĕртен çавăн пек пулчĕ, вăл — таса чунлă çынах, — терĕн эсĕ чăнах та.

Ытти вара йăлтах — хăвăрт пулса иртрĕ. Эсĕ Ванькин сăмахĕпе килĕшнĕ пулсан, ман çинчен ун пекех калană пулсан, нимĕн те пулман пулĕччĕ, эпĕ пуçа усса, пăрăнса çеç кайнă пулăттăм, анчах санăн сăмахусем манăн юлашки чăтамлăха пĕтерсе лартрĕç. Эпĕ хăвăрт сирĕн умма тухса тăтăм та, хам калама çук пысăк ăссăрлăх тунине пĕлсех, пĕр сăмах чĕнмесĕр, Ванькина кăкăрĕнчен тытрăм, унтан ăна питĕнчен çупрăм. Кăкăрĕнчен тытнипе, вăл ӳкмерĕ, эпĕ ăна тепре хыттăн çапрăм, вара хам умран тĕртсе ятăм...

Эпĕ лайăх туйрăм, ку—манăн вăй пĕтсе çитнине кăна пĕлтерчĕ. Çавăнпа пĕрлех ку вăл юлашки темиçе çул хушшинче хам мĕн чăтса ирттернине, мĕн асап курнине чунран ăссăррăн силлесе кăларма тăрăшни те пулчĕ... Пĕчĕк ача чухне çапăçнине шута илмесен, эпĕ халиччен никам çине те, нихçан та алă çĕклеменччĕ. Ванькин ырăнĕнче пĕр-пĕр урăх çын пулнă пулсан, эпĕ кун пек туман пулăттăм-и тен, ман

çинчен вăл каланине урăх çын каланă пулсан, эпĕ — килĕшнĕ те пулăттăм. Вăл тĕрĕсех каларĕ: эпĕ, хам хăрса пынă май, чăнах та сан умăнти пурнăç чечекĕсене те хăртса, таптаса пынă. Эпĕ сана телей кӳмен. Анчах киревсĕр чунлисем те çын çинчен киревсĕр калаçма тивĕç илмен. Вĕсенчен пĕри çак тĕрĕслĕхе пăсни — мана çапла... хулиган туса хучĕ. Тӳрре тухас тесе хуçкаланни, ăнлантарма тăрăшни ним чухлĕ те тĕрĕс пулман пулĕччĕ. Эпĕ мĕншĕн çапла ирсĕр тума пултарнине пĕлес тесен, манăн пурнăçа, манăн шухăшсен мĕнпур аталанăвне, хăть юлашки пĕр тăват-пилĕк çул хушшинчи аталанăвне, экрэн çинчи пек пĕр сиктермесĕр курса, сăнаса тăрас пулатчĕ. Анчах апла тума май çук. Ку вара манăн айăп мар, çавăнпа кăмăлсăрланни те, ӳпкелени те вырăнсăр.

Манăн биографи тулаш енчен пĕрре те пуян марччĕ. Шкулта вĕреннĕ, аслă шкул пĕтерпĕ, пилĕк çул—ĕçленĕ. Манăн пурнăç шухăш катăркалăх енĕпе, шухăш кăткăслăхĕпе çеç пуян та йывăр пулнă, халь акă вăл тулаш енчен те пĕр фактпа пуянланчĕ: эпĕ айăпланаканнисен шутне кĕтĕм... Хăрушă япала—тĕлĕкре те тĕлленме пултарайман эпĕ ăна унччен, анчах вăл инкеке халь чăтса ирттертĕм ĕнтĕ. Тĕрĕссипе, ирттермен-ха, мĕнле ирттересси çинчен çеç палăртса хунă, анчах ху умăнти йывăрлăха мĕнле ирттересси çинчен малтанах уççăн палăртса хума пултаратăн пулсан, йывăрлăхне ирттерсе яма та вара сана çăмăлрах пулать. Çавăнпа эпĕ—лăпкă.

...Таня! Манăн—пурăнмалла. Эпĕ çамрăк-ха, çавăнпа манăн—нумай пурăнмалла. Эпĕ пурнăçра хамăн телее çапах та тупасшăн. Хăй телейне тупма пултарайман çын—тĕссĕр чĕрчун, сĕткенсĕр ӳсентăран. Эпĕ ăна пĕлетĕп.

«Эпĕ пурнăçра вăтаммине мар, чи лайăххине кăна шыракан çын. Анчах яланах ху ĕмĕтленнĕ пек пулмасть, çавăнпа ăнăçсăррисен шутне кĕрсе юлма та — çăмăлах. Кусен пурнăçĕ — чи тĕссĕр пурнăç. Вĕсем вара кайран хăйсем пурăнмаççĕ, пурнăç хăй кăна вĕсене пурăнтарать. Эпĕ кун пек пулма килĕшместĕп, çавăнпа манăн епле пулсан та ăнăçсăррисен шутне кĕмелле мар — нихăçан та. «Ху ĕмĕтленнине туса çитерменни — чи пысăк преступлени»,— тесе çырнăччĕ эпĕ ултă-çичĕ çул каялла. Анчах вăл сăмахсене çырнă чухне ăнсăртран ман пуçа çакăн пек шухăш пырса кĕнĕччĕ: «эпĕ ку шухăш тĕрĕссине пĕлетĕп, анчах хам çав шухăшсене пурнăçпа çирĕплетсе пама пултаракан çын пулма пултарайăп-и?»

Ăçтан килнĕ вăл шухăш ун чухне,—пĕлместĕп, анчах халь, темиçе çул иртсен, тĕплĕн тишкĕрсе пăхсан, унра пĕрремĕш иккĕленӳ сывлăшĕ пулни курăнать.

Таня, Таня! Мĕнле ĕмĕтленнĕччĕ эпир санпа пĕр каçхине... Атăл хĕрринче тăтăмăр. Анатра, шыв айĕнчен пекех, тулли уйăх çĕкле-

нетчĕ, ун патĕнчен пуçласа, Атăл тăрăшшĕпе, пирĕн пата çитиех, хĕрлĕ вут юпи тăсăлса выртнă. Ăçта килчĕ унта çутăсем йăлтăртатаççĕ, пĕчĕк буксирсем кăшкăртаççĕ. Атăл урлă пароm каçать, шыв айĕнче унран юлмасăр хĕрлĕ, симĕс, сарă çутăсемпе йăлтăртатса, унăн тепĕр май çаврăнса ларнă кутăнла мĕлки ишет. Аялта — пристань, халăх шавлать. Атăл леш енче те çап-çутă, унта — поселоксем.

...Атăл кукăрĕ патне çитрĕмĕр — кунтан хула кĕтесси пуçланать. Кукăрта пĕчĕк сăмсах. Çеçпĕл Мишши çакăнта килме юратнă, ку сăмсаха Çеçпĕл сăмсахĕ теççĕ.

— Пĕлетĕн-и, мĕншĕн телейлĕ эпĕ? — ыйтрăм санран çавăнта.

— Мĕншĕн? — хирĕç ыйтрăн эсĕ.

— Шанчăк пуррисем — телейлĕ! — каларăм эпĕ Çеçпĕл сăмахне. Çирĕппĕн, ĕненсе каларăм... Анчах тата тепĕр çулталăкран эпир пĕррехинче каллех çав сăмсахра пултăмăр та, ун чухне эпĕ, каллех Çеçпĕле аса илсе, çапла шухăшларăм: «Шанчăк пурри çеç мана телейлĕ тăваймĕ. Эпĕ хам шанса тăнине пурнăçласа çитерсен кăна телейлĕ пулнă пулăттăм...»

Тишкĕрсе пăхсан, ку — манăн вăйсăрлăха кăтартакан шухăш пулнă...

...Хăш вăхăтра эпĕ йăнăш çул çине кĕрсе кайнă? Манăн мĕнпур пурнăç лапкăшпех йăнăш пулман ĕнтĕ, йăнăшма пуçланин пĕр-пĕр вырăнĕ, паллăрах чикки пулма кирлех. Çамрăк чухне эпĕ пысăк çын пулма ĕмĕтленнĕ. Питĕ нумай вулаттăм. Музыкăна юрататтăм. Нумай чухне пĕччен çӳреттĕм. Чĕрере — поэзи. Чун-чĕре пĕр хама çеç паллă музыкăпа тулса ларать те, эпĕ вăрмансен, хирсен, пĕлĕтсен илемлĕхне сăнатăп, хам çапла шухăшласа илетĕп: «манăн юлташсем çак илемлĕхсене ман пек туйма пултараççĕ-ши, вĕсем ман пек киленме пĕлеççĕ-ши? Темĕн, çук пулĕ...»

Мĕншĕн çапла шухăшланă эпĕ? Хампа ытла та кăмăллă пулнипе-и? Пĕлместĕп... Эпĕ ун чухне вунтăвата-вунпилĕк çулсенче пулнă. Çапла хама-хам — пĕрремĕш хут пĕлe пуçланă...

Çав вăхăталлах пĕррехинче эпĕ çапла шухăшларăм: «Эпĕ искусство произведенийĕсене юрататăп, вĕсене: литературăпа музыкăна, живописçе — тĕплĕн, тĕрĕс ăнланатăп. Апла пулсан, эпĕ мĕншĕн хам та çав произведенисене çыраканĕсем пек пулма пултараймастăп-ха? Талант патне çул тытасси пуçламăшĕ чи малтан таланчĕсене хăйсене ăнланнинче мар-и?..»

Çапла эпĕ пĕрремĕш хут хамăн пуласлăх çинчен шухăшланă. Илемлĕн, çуттăн курăннă вăл мана, анчах малтанлăха — уçăмлах мар-ха. Илемлĕх уçăмлăхра пулнине эпĕ ун чухне ăнлансах çитерейменен.

Вăтам шкул пĕтерсен историпе-филологи факультетне вĕренме кĕтĕм. Пĕрремĕш курсра чухне çапла çырса хунăччĕ:

«Хăвна нихăçан та пĕчĕке ан хур. Сăмахран, эсĕ пĕр-пĕр наукăсен кандидачĕпе калаçатăн. Вăл пысăк çын тейĕпĕр, эсĕ — пĕрремĕш курс студенчĕ кăна. Анчах хăвна пĕрре те унран аялта тесе ан шутла, мĕншĕн тесен вăхăт иртнĕ май эсĕ унран çӳлĕрех пусăмра тăма та пултаратăн...»

Эпĕ кашни кун, кашни каç кĕнекепе лараттăм, вулаттăм. Хам енчен, пĕчĕк сыпăксем, шухăшсем çырса хунисĕр пуçне, нимех те туманччĕ-ха, вара пĕррехинче çирĕппĕн çапла каларăм: «Эпир çынсем хатĕрлесе панине питĕ нумай илетпĕр, хамăртан парасси çинчен шухăшлама та — вăхăт». Анчах манăн «хамран памалли» уçăмлăн çаплах нимех те курăнмарĕ. Пĕлеттĕм: тарăн шухăшлă, сулăмлă япала çырмалла: повесть-и вăл, роман-и, — пурпĕрех, анчах шухăшсем сапаланчăкчĕ. Вăхăт çитсен, вĕсене пухатăп, пĕрлештеретĕп, — теттĕм. Эпĕ ун чухне хĕрӳллĕччĕ-ха, шанаттăм, ĕмĕтленеттĕм. Ку мана — вăй парса тăратчĕ.

...Пĕррехинче, — эпĕ ун чухне виççĕмĕш курсраччĕ, — пĕр юлташ мана хăй патне чĕнчĕ. Эпир хĕрлĕ ерех ĕçрĕмĕр.

— Итле-ха, мĕншĕн мана час-часах кичем? — ыйтрĕ вăл.

Юнашар пӳлĕмре радио юрлатчĕ — лăпкă, тарăн шухăшлă кĕвĕ. Уçса пăрахнă чӳречерен кас-кас вăркăш çил кĕрсе тухать, урамра пĕчĕк ачасем çӳлĕ мар хӳме çинчен çĕре сикмелле выляççĕ. Пĕрин амăшĕ хăйĕн ачине вăрçа-вăрçах килне çавăтса каять, ачи — ӳксе сăмсине çĕмĕрнĕ...

Манăн юлташ пессимизм çинчен калаçа пуçларĕ. Каччи ăслăччĕ вăл, лайăх вĕренетчĕ, анчах час-часах темшĕн салхуллăччĕ.

— Чи телейлĕ вăхăт манăн — букварь çинчи сăвăсене, калавсене вуланă вăхăт, — терĕ юлташ, урамри ачасем çинелле пăхса.

«Чи телейлĕ вăхăт — паянхи кун, мĕншĕн тесен эсĕ паян ыранхи çинчен чи уçăмлăн шухăшлама пултаратăн», — терĕм эпĕ хам ăшăмра, çав вăхăтрах юлташа та, ун кăмăл-туйăмне те — ăнлантăм... Анчах пĕр-пĕрне ăнланма пĕр пек шухăшлисем çеç пултараççĕ-çке-ха. Апла пулсан, юлташ шухăшĕ манăн шухăш та пулать?.. Эпĕ çавна ун чухне лайăххăн татса параймарăм.

— Эпĕ хам пессимист пулса каясран та хăратăп, — каларĕ юлташ.

«Лермонтовăн та пессимизм пулнă, анчах ун пессимизмне Горький вăйлă çын тунсăхĕ, тет. Эсĕ урăх тĕнчере пурăнатăн. Эсĕ пессимист пулсан, вăл санăн вăйсăрлăхна çеç кăтартать. Пирĕн вăхăтра пессимизмпа чирлекеннисем — вăйлисем мар, вăйсăррисем çеç», — шухăшларăм эпĕ. Юлташран вăл мĕншĕн çапла каланине ыйтрăм.

— Эсĕ кама та пулсан юрататăн-и? — хирĕç ыйтрĕ вăл.

— Ав, мĕн! — кулса илтĕм эпĕ. — Эсĕ вара çавăншăн пессимистланма шухăшларăн-и? — анчах çав самантрах хам та сасартăк шухăша кайрăм.

«Ку таранччен те эпӗ хам валли хӗр тупман, ҫаплах пӗччен пурӑнатӑп... Мана халиччен пӗр хӗрача та юратса курман-ха, хам та ун ҫинчен никама та каласа пӑхман. Юрату ҫинчен яланах шухӑшлатӑп, ун ҫинчен кашни кунах ӗмӗтленетӗп, анчах хам, ӑна тӗл пулма май килсен, хӑраса ӳкетӗп. Хамӑн ку таранччен йӗркеленсе ҫирӗпленнӗ пурнӑҫ тытӑмӗ пӑсӑлса кайма пултарни мана темле хӑрушлӑх евӗр туйӑнса тӑрать...

«Тен, ӑна тупассишӗн ҫунмалла та мар, тен, эпӗ чӑн-чӑн юрату тӗл пулсан, хамӑн вӑя ҫухатса кӑна ярӑп, тен, ӗмӗтленсе юрату шырани кӑна мана вӑй парать?» — час-часах шухӑшлаттӑм эпӗ, анчах мана ҫав вӑхӑтсенче ҫапах та — йывӑрччӗ.., Йывӑрлӑх пӗрисене пусарса ҫитерме пултарать, теприсене — тата вӑй хушса парать. Ҫав вӑхӑтрах, ялан пӗр пек тӑсӑлакан япала ҫынна ывӑнтарать те...»

— Апла ку черккене уншӑн ӗҫер, — терӗм эпӗ шӳт тунӑ евӗрлӗ. Ҫав шӳтре хамшӑн нумай шухӑшлӑ пӗлтерӗш пуррине, чылаях тунсӑхпа асаплану пулнине хам кӑна лайӑх туйса илтӗм.

Таня! Ҫак калаҫу хыҫҫӑн пӗр ҫулталӑкран эпӗ сана тӗл пултӑм. Эсӗ, консерваторинче вӗренекен хӗрача, каникула килсен хулари студентсен вечерӗнче концерт патӑн. Эпӗ малти ретре ларатtӑм та, санӑн илемне йӑлтах куртӑм. Эсӗ сӗрме купӑспа тӗлӗнмелле ӑста каларӑн, пур япалана та мантарса ямалла...

Концерт хыҫҫӑн ташӑсем пулчӗҫ. Эпӗ ҫынсем ташланӑ вӑхӑтра кӗтесри диван ҫинче ларатtӑм. Сасартӑк ман пата икӗ хӗрача пычӗҫ — эпӗ кӑртах сикрӗм...

— Ларма юрать-и? — ыйтрӑн эсӗ.

Эпӗ, кӑшт сиксе, сире вырӑн патӑм.

— Мӗншӗн тата ташламастӑр? — ыйтма хӑйрӑм хам ҫавӑнтах.

— Эсир те ташламастӑр-ҫке? — терӗн эсӗ.

— Ман хӑть сӑлтавӗ пур: эпӗ ҫак ташӑсене юратсах каймастӑп та, ҫавӑнпа ташламастӑп та, — хама ирӗкрех тытрӑм эпӗ.

Ҫав вӑхӑтра музыка чарӑнчӗ, часах вальс янраса кайрӗ. Эпӗ хамӑр паталла, тӗрӗсрех — сирӗн пата — пӗр вӑрӑм студент килнине куртӑм, вара хӑвӑрт ура ҫине тӑтӑм. Эсӗ — килӗшрӗн.

Ташланӑ чухне пӗр-пӗринпе паллашрӑмӑр. Кайран сана — ӑсатса ятӑм. Каҫӗ ӑшӑ тӑратчӗ, сывлӑшра ҫӑмӑл юр пӗрчисем вӗҫкелеҫҫӗ, юпасем ҫинчи электричество ламписем патӗнче вӗсем — шурӑ лӗпӗшсем евӗр куранаҫҫӗ. Урамра ҫаплах ҫынсем нумайччӗ...

— Сиртен ыйтма юрать-и? — сӑмах пуҫларӑм эпӗ. Эсӗ ирӗк парсан, ҫапла ыйтрӑм:

— Калӑр-ха, эсир хӑвӑр тӗлӗнмелле сӗрме купӑсҫӑ иккенне пӗлетӗр-и?

Эсӗ шӳтлесе ирттерсе ятӑн. Эпӗ татах ыйтрӑм:

— Калӑр-ха, эсир хӑвӑр чи хитре хӗр иккенне пӗлетӗр-и?

— Мĕншĕн? — сасартăк урăхлантăн эсĕ.
— Каçарăр, ыйту çине ыйтупа хуравларăр...
— Эпĕ хам çинчен нихăçан та шутламан. Пĕлместĕп, те хитре, те — çук... — терĕн эсĕ.
— Тавтапуçах, апла эпĕ — кăмăллă...
— Мĕншĕн?
— Хĕрача хăйĕн тулаш енĕ илемлине туйсан, унăн шалти илемĕ чакать. Анчах хăвăр çинчен шухăшламанни, каçарăр, ман шутпа, сирĕн çитменлĕх вăл. Кашни çыннăнах хăйне хăй хак пама пĕлмелле, хăй çинчен шухăшлама вĕренмелле. Ху тĕллĕн шухăшласа çӳрени — питĕ кирлĕ япала... Çыннăн çав япала çук пулсан, кичем вара.
— Анчах çыннăн хăй çинчен кăна шухăшлама пĕлнисĕр пуçне урăх ним те çук пулсан, вăл — пушшех те кичем! — терĕн эсĕ. Ку—ман сăмахран çӳлте тăракан ответ пулчĕ. Эсĕ малалла каларăн.— Эпĕ, чăнах та, хам мĕнле-ши тесе нихăçан та шухăшламан. Те çитменлĕх вăл, те — çитменлĕх те мар... Эпĕ пурăнатăп, вĕренетĕп, хама хам нихçан та кӳренмен...
— Калăр-ха, сире вĕренме йывăр-и? Сăмахран, сĕрме купăспа калама вĕренме?..
— Пĕрре те, — терĕн эсĕ.
«Тарăнăн шухăшласа, пур енчен те ăнланса, ху мĕн тунине ыттисеннипе танлаштарса ĕçлетĕн пулсан, ман шутпа, нихçан та çăмăл мар. Эсĕ сĕрме купăспа, сăмахран, тĕлĕнмелле лайăх калама вĕреннĕ. Сана пĕрре те йывăр мар, тетĕн. Мĕнле-ха апла? Эсĕ вара çавна тĕплĕн шухăшламасăрах, ăнланмасăрах тунă-и? Çапла пулсан, эпĕ йывăрлăх çинчен халь каланă сăмах — тĕрĕс мар апла?.. Тĕрĕс пулсан та, пуриншĕн те мар. Анчах мана йывăр. Эпĕ киленӳрен ытларах кăмăлсăрлăх, тарăху куратăп. Эпĕ талантпа çуралман, талантне манăн — хамăн çуратас пулать»...
— Мĕн çинчен шухăшлатăр эсир? — ыйтрăн эсĕ.
— Хам çинчен, — терĕм эпĕ.
Эсĕ чĕнмерĕн, пуçна усса пытăн. Кăшт кайсан, ман çине тинкерсе пăхрăн.
— Эсир вара яланах хăвăр çинчен шухăшлатăр-и? — ыйтрăн асăрханса.
— Халлĕхе — çапла. Анчах мана эгоист тесе ан калăр. Çынсене пысăк телей кӳрес тесен, чи малтан ху çинчен уççăн шухăшласа çитерес пулать... Унсăрăн, ман шутпа, май çук...
— Шухăшласа çитерме сире вара нумай вăхăт кирлĕ-и?
— Пĕлместĕп. Нумаях мар пуль, тетĕп...
Эпир сирĕн хваттер патне çитрĕмĕр. Эсĕ чарăнса тăтăн та ман çине пăхрăн. Эпĕ те сана куçран пăхрăм...
Мĕн кирлĕччĕ-ха мана çав самантра? Эсĕ чипер, санăн кашни

сăмаху, кашни хусканăву çын кăмăлне каймалла. Сана такам та юратса пăрахма пултарать, эпĕ хам та яланах сан пек хĕрача çинчен ĕмĕтленнĕ, анчах ак, сана тĕл пултăм та, çамрăклăх, юрату туйăмĕсем манăн йăлтах таçта шала кайса хĕсĕнсе-пытанса ларчĕç, эпĕ—калаçма пултараймарăм...

— Эсир — интереслă çын, — терĕн эсĕ, кăшт кулса.

Ку сăмах мана шартах сиктерчĕ.

— Мĕншĕн ун пек шутлатăр? — ыйтрăм эпĕ.

— Калăр-ха, эсир пысăк çын пулма, калăпăр, пĕтĕм Совет Союзĕпе паллă çын пулма, ĕмĕтленмен-и?

— Эпĕ ун çинчен те, вăл шухăша систерекен сăмах та сире пĕрре те каламарăм, — сиввĕнрех хуравларăм эпĕ. Эсĕ каллех кулса илтĕн.

Киле кайнă чухне çапла шухăшларăм:

«Эпĕ юратас пултарулăха та пĕтĕмпех çухатман-и? Мĕншĕн-ха манăн çавăн пек типĕ сăмахсем кăна пулчĕç?..» Унтан эсĕ ыйтнă сăмаха аса илтĕм: «Пысăк çын пулма ĕмĕтленмен-и?» Чăнах та, кам эпĕ? Мĕн эпĕ? Ытти юлташсенчен мĕнпе уйрăлса тăратăп? Ушкăнра чухне эпĕ те — вĕсем пекех хаваслă, çăмăл; час-часах шӳт тăвататăп, анчах ушкăнра эпĕ — сахал пулатăп... Çакă мана халь уйрăмах уççăн курăнать. Шкулта чухнех эпĕ нумайрах пĕччен пулма юратнă. «Мана ыттисем пек пĕр шухăшсăр выляса, чупса çӳреме юрамасть, эпĕ — урăххи çинчен шухăшламалла», — теттĕм ун чухнех. Институтра та — çавнах шухăшланă.

Эпĕ коллективран уйрăлса кайман-и? Аскет пулса каясран хăрамалла мар-и манăн? — тесе те шухăшлаттăм, анчах хамăн шухăшкăмăл йĕркинче, пурнăç тытăмĕнче ытти юлташсен шухăш-кăмăлĕпе, вĕсен пурнăçĕпе кусĕретех килĕшсе тăман япаласем нимĕн те çуккине курсан, — лăпланаттăм. Анчах манăн ăс-хакăл, хускатса янă машина пекех, пĕр самант та ĕçлемесĕр тăма пултараймастчĕ. Эпĕ час-часах хамăн пурнăç çине çаврăнса пăхаттăм, хамăн шухăшсен тĕнчи ăшне кĕреттĕм. Хам ытти юлташсенчен уйрăлса тăнине эпĕ çапах та туяттăм: вĕсене хирĕçле тăнине мар, вĕсенчен уйрăлса тăнине...

Пĕррехинче спорт залĕнче акробатсен выступленийĕ пулчĕ. Пĕр юлташ çапла ыйтрĕ.

— Кĕвĕçместĕн-и?

«Кĕвĕçместĕп, савăнатăп çеç, — шухăшларăм ăшăмра. — Ун пек çамрăксене эпĕ юрататăп, анчах кашни çыннăн—хăйĕн пурнăçĕ, хăйĕн çулĕ. Эпĕ питĕ сахал енлĕ аталаннă: физкультурник та, акробат та, декламатор та, юрăçă та мар. Эпĕ пĕр япалана кăна пĕлетĕп, пĕр япалана кăна ĕмĕтленетĕп: манăн чаплă та ăслă произведенисем çырмалла, этем шухăш-кăмăлне, ун чун-чĕрине сăнама вĕренмелле. Анчах эпĕ чап илессишĕн çырмастăп, пачах та ун пек киревсĕр шухăш çук манăн, эпĕ — чаплă япала кăна тăвасшăн, ăна тума пултарнине ĕне-

несшĕн. Мана чап кирлĕ мар, чаплă япала тума пултарни кирлĕ... Ана тăруках тăваймастăн. Эпĕ халĕ — вĕренетĕп кăна-ха, çавăнпа манăн хуçăлса-пăшăрханса ӳкмелли нимех те çук. Час-часах йывăр шухăшсем килсе хуплаççĕ пулин те — манăн çирĕп пулмалла»...

Таня! Вĕренсе тухсан, кайран эпир санпа пĕрлешрĕмĕр. Эпĕ телейлĕччĕ, сана юрататтăм. Пурнăç манăн ун чухне хĕвел çутипе çуталнă пек çуталса кайнăччĕ, анчах вăхăт иртет, вăхăт шăвать. Хамăн телее ĕмĕрĕпех çемьере кăна, сана юратнинче кăна курса тăни—пĕчĕк япала пек туйăна пуçларĕ мана. Эсĕ хăвăн талантна кунран-кун пĕрер пусăма çĕклесе пытăн, санăн яту кĕске самантрах пĕтĕм çĕршывĕпе паллă ят пулса тăчĕ. Концертсенче сана чечексемпе вите пуçларĕç, эпир иксĕмĕр урампа пынă вăхăтсенче çынсем яланах сан çине вăрттăн пăхса, пăшăлтатса калаçатчĕç. Çав вăхăтрах вĕсен куçĕсене эпĕ хам çинче те куратtăм. «Кам-ши унăн упăшки, мĕнле çын вăл?—тенĕ пек туйăнатчĕç вĕсем мана. — Мĕне тăрать-ши вăл хăйĕн арăмĕ çумĕнче?.. Çавăн пек чухне мана уйрăмах йывăрччĕ: тивĕç-и эпĕ санпа юнашар пыма, сана çавăтса утма. Ытларах шухăшламан-и эпĕ хам çинчен?..»

Эсĕ мана çав-çавах хытă юратни—чул пек йывăррăн пуса пуçларĕ.

— Таня, кала-ха пĕр пытармасăр, мĕншĕн юрататăн эсĕ мана?— ыйтрăм эпĕ пĕррехинче.

— Пĕлместĕп,—хуравларăн эсĕ.

— Таня, юрататăн пулсан, мĕншĕн юратнине пĕлесех пулать.

— Эпĕ пĕлесшĕн те мар!—терĕн эсĕ. Унтан сасартăк ман çине тарăнăн-тарăнăн пăхрăн. Эсĕ туйрăн пулас ман чĕрере çав самантра мĕн пулнине, мана мĕн канăç паманнине—лайăх пĕлтĕн пулас... Анчах эпĕ çав каçхине хваттере ӳсĕр килтĕм. Каярахпа, хам сисмесĕрех,— ĕçке ерсе кайрăм... Хам мĕншĕн ĕçнине тĕпĕ-йĕрĕпех ăнланма эпĕ хам анчах пултарнă. Мана халь хулара ӳсĕр çӳрекен çынсем ĕçре телейпе савнăç куракан çынсенчен ытларах интереслентере пуçларĕç, эпĕ пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн пурнăçри çутă сăнсене мар, хура сăнсене çеç куракан пултăм. Ку—манăн трагеди пулчĕ. Халь ĕнтĕ çырма ларсан та манăн çавăн пек хура та салхуллă сăнсемсĕр, шухăшсемсĕр пуçне нимех те тухмасчĕ. Темиçе çул каялла пичетленнĕ ик-виçĕ пĕчĕк произведени манăн мĕнпур творчество пулса юлчĕ. Куçару ĕçĕнче мана чылайăшĕ ăстаçă тесе калатчĕç, ман куçарусене нихçан та хурламанччĕ, анчах халь эпĕ вăл ĕçе те курайми пултăм: «Çын çырнине тепĕр чĕлхене куçарма пулĕ те пулĕ, анчах хăвăн мĕн пур санăн? Хăвăн шухăшусем ăçта? Эсĕ вара чĕлхеçĕ кăна пулма ĕмĕтленнĕччĕ-и?..»

Эпĕ хам пекех ӳсĕр çынсемпе калаçрăм, вĕсемпе пĕрле ларса, черкке шаккаса ĕçеттĕм. Хам çав вăхăтра лайăх туятăп: кусем,—вĕсен шутĕнчех хам та,—пурнăç каяшĕсем. Тахçан Максим Горький çавнашкал çынсене сăнама юратнă, анчах вăл вĕсенче пĕтнĕ çынсене анчах

мар, вăйлă çынсене те курнă, мĕншĕн тесен ун чухнехи пурнăç никĕсĕ çав çынсене хăй çуратнă... Пирĕн вăхăтра ĕçкĕпе шăварăннă çынсем—иртнĕ пурнăçăн юлашкисем çеç, вĕсем пурнăç никĕсĕнчен хăйĕнчен тухакан япала пулманнине эпĕ яланах курса тăнă. Вĕсем юлашкинчен пурте пĕр япала патне пыраççĕ—вăйсăрлăх патне.

Мана çавăн пек çынсем çинчен шутласан, хăрушă пулса каятчĕ, вĕсен шутĕнчех хам та пулнине аса илсен—пушшех те...

Киле пырсан, эсĕ ӳпкелешнине илтеттĕм, санăн хуйăхна куратттăм, çав хуйăха кӳрекенĕ хамах пулнине пĕлнĕ май, мана ниçта кайсан та канăç çукчĕ. Эсĕ ӳкĕтлеттĕн, эпĕ—пĕтнĕçем пĕтсе пыраттăм...

Хăшпĕр чухне ним тăвайман енне час-часах сан умăнта хама хам айăплаттăм, хам çине хам кӳреннине кăтартаттăм, анчах юлашкинчен пĕрре эсĕ, ассăн сывласа, çапла каларăн:

— Санăн нăйкăшассисĕр пуçне урăх ним те юлмарĕ иккен...

«Нихçан та, никам умĕнче те ху çинчен ан калаç, мĕншĕн тесен ху çинчен каланă кашни сăмахах е мĕн чухлĕ те пулин нăйкăшни, е мĕн чухлĕ те пулин мухтанни пулать»,—шухăшларăм эпĕ. Çавăн хыççăн—чĕмсĕр çын пулса тăтăм...

Хăшпĕрисем ман çине йĕрĕнсе пăха пуçларĕç. Мана кам та пулин кӳрентерес пулсан, эпĕ нимĕн те чĕнместĕм, анчах хам çинчен йĕрĕнсе каланă кашни сăмахшăнах чăтма çук асапланаттăм, çав вăхăтрах тата ун пек кашни сăмахах лăпкăн кулса кĕтсе илнĕ пек кăна кăтартма тăрăшаттăм.

Эсĕ çынсем çинчен калаттăн. Çынсем мĕншĕн пирĕн пек мар-ха, йĕркеллĕ, хавасла, телейлĕ пурăнаççĕ, теттĕн.—Хăть вĕсенчен намăслан кăштах, тесе ӳкĕтлеттĕн... Таня! Эсĕ ун чухне те мана... юратнă иккен. Анчах эпĕ, хамăн вăйсăрлăха, хам пĕтнине тĕппипех йышăнас килменнипе, каллех çапла шухăшлаттăм: «Ас-тăнсем çитĕнсе çитнĕ, ӳт-пӳсем пирченĕ, шăмăсем çирĕпленнĕ — пирĕн ĕнтĕ халь шкул ачисем пек çынсенчен, кĕнеке çинчи геройсенчен воспитани илмелли вăхăт мар... Эпир халь хамăра хамăр çех вĕрентсе тӳрлетме пултаратпăр, хамăра хамăр кăна». Çапла, ху пĕтсе пынине туйса тăрасси — чи йывăр япала, анчах хăвăн йăмшаклăхна, хăвăн çитменлĕхӳсене тĕпĕ-йĕрĕпе йышăнасси — пушшех те йывăртарах... Эпĕ асапланаттăм, кас-кас мана хăрушă пулса каятчĕ. Пĕлеттĕм: манăн хам ĕмĕтсене, тĕллевсене пурнăçлас тесе кĕрешмелле, чăркăшмалла, çапăçмалла—анчах эпĕ ăна тума пултараймасттăм. Хăвăнпа ху çапăçасси çынпа çапăçассинчен вунă хут йывăртарах... Эпĕ хама хам пачах шанми те, пурнăça ĕненми те пулаттăм, çавăн чухне йĕри-тавралăх тĕлĕк пек туйăнса каятчĕ, çынсем—мĕлке пек курăнса илеççĕ... Пуçра час-часах: «Нумаях пымасть пуль ĕнтĕ, эпĕ хама хам пĕтеретĕп пулмалла»,—текен шухăш çуралатчĕ, анчах эпĕ ăна, те унран хăранипе, унран вăтаннипе,—шухăш вырăнне мар, шухăш мĕлки вырăнне кăна йышăнаттăм.

«Çитет ёнтĕ, çитет! Мĕнле те пулсан вăй пухасах пулать»,—тесе чараттăм хама яланах, анчах, пурăнас килет пулсан та, иртнинчен кăтăлма çукчĕ. Пурнăç çаплипех малалла тăсăлчĕ... Кашни утăмах сăнаса пыраттăм пулин те, кашни утăмрах йăнăш пулса пыратчĕ, мĕншĕн тесен эпĕ ёçне тăвакан çын мар, ёçне тăвасси çинчен шухăшлакан çын кăна пулса тăтăм...

...Эсĕ юлашкинчен ман патăмран кайрăн. Сана кӳренмелли манăн нимĕн те çук — эпĕ сана телей кӳмен. Эпĕ пысăк ĕмĕтсем ĕмĕтленнĕ, çынсен чунне уçса паракан ăстаçă пуласшăн пулнă, анчах тĕрĕссипе эпĕ çынсен чунне сăнама вĕренессинчен ытларах хамăн чуна сăнама çеç вĕреннĕ... Ку вăл — питĕ пысăк йăнăш...

Ыран мана судпа айăпласçĕ, икĕ çуллăха-и, виççе-и—мана ирĕке çухатма тивĕ. Анчах темшĕн халь эпĕ хама лăпкă туятăп. Тен, манăн çĕнĕрен шанчăк çуралать? Умра малашлăх пуррине туйни çынна шанчăк паратех пулас... Эпĕ иртнине аса илесшĕн мар, анчах—манса та каясшăн мар. Иртни—ытла та пысăк вăйсăрлăх, пĕчченлĕх, анчах эпĕ малашне çирĕп, чăн-чăн пурнăçпа пурăнма вăй çитерсен, вăл, иртнĕ пурнăç, мана тарăхтарман пулĕччĕ, мĕншĕн тесен вăл — ман пурнăçăн пулас чапĕ, çĕнĕ илемлĕхĕ пулма пултарать... Малашлăх пуррине туйни—киввине йăлтах айккине сирсе çитерме пулăшĕ. Пĕр япалашăн кăна ӳкĕнетĕп, Таня, кивви́ĕ манăн чи хаклă япалана илсе юлма пултарчĕ — сана...»

Алексей çырма пăрахрĕ те, пукан хыçĕ çине таянса, хускалмасăр ларчĕ.

«Кам валли çыратăп?»—пăшăлтатса ыйтрĕ вăл, кăшт тăрсан.— Эпĕ ăна пурпĕрех никама та кăтартман пулăттăм вĕт-ха...»

Анчах хăйĕн шухăшĕсене кĕскен хут çине çырса хуни ăна кăштах лăплантарчĕ. Вăл ура çине тăчĕ те пӳлĕм тăрăх каллĕ-маллĕ уткаласа çӳрерĕ...

«Чăнах та, эпĕ халь темшĕн кăшт лăплантăм пек, — тепĕр хут сĕтел патне пырса шухăшларĕ Алексей.—Хамăн шухăшсене йĕркешерĕн хут çине çырса хуни мана яланах уçăмлăрах шухăшлама май парать. Анчах лăплантăм пулсан та мана çапах çăмăл мар. Мĕншĕн? Эпĕ ăна пĕлетĕп. Пĕр енчен лăпкăлăх килчĕ пулсан, тепĕр енчен ман çине урăх япала, урăх туйăм калама çук йывăррăн йăтăнса тухрĕ. «Кам валли çыратăп» тенĕ сăмаха эпĕ пăшăлтатса каларăм. Маншăн халь кашни пĕчĕк япалах пысăк пĕлтерĕшлĕ туйăнать. Ак çак пăшăлтатса калани те—çавăн пекех, мĕншĕн тесен вăл, тĕрĕссипе калас пулсан, манăн çак самантри пурнăçăн чи пысăк енне кăтартрĕ, çав ен вăл—манăн пĕчченлĕх. Ăçта каймалла? Кампа калаçмалла? Анчах эпĕ халь çынпа калаçса, хамăн хуйăха çынна каласа, çын умĕнче нăйкăшса хама лăплантарасшăн-и вара? Хăвăн хуйăхна юлташна каласа парсан, вăл, санăн хуйăху, çурри чакать, теççĕ. Куна эпĕ ĕненетĕп, анчах

пур чухне те апла пулмасть вĕт-ха вăл. Инкеке юлташпа пĕрле ирттерме юрать, анчах хăвăн айăпу пирĕкиех пулнă инкеке юлташпа пĕрле ӳйăрни...— çук, эпĕ кунпа килĕшместĕп... Тепĕр тесен тата, мĕнле хуйăх манăн, мĕнле инкек? Ах, мĕн тери киревсĕр пулса тухрĕ пĕтĕмпех! Мĕн тери вак-тĕвек шухăшсем халь манăн!..»

Вăл стена çумĕнчи пысăк портрет çине пăхрĕ — вĕсен, Таньăпа унăн сăнӳкерчĕкĕ. Ăна тăватă çул каялла ӳкерттернĕччĕ. Ун чухне иккĕшĕ те хаваслă пулин те (ăна Алексей лайăх астăвать) сăнӳкерчĕк çинче Таня темшĕн салхуллăрах тухнă...

Вăл, сăнӳкерчĕк патĕнчен пăрăнса, чӳрече патне пычĕ. Çурт умĕпе, чӳрече умĕнченех, пĕр çамрăк каччăпа хĕрача иртсе кайрĕç, кăшт кайсан, темшĕн чарăнса тăчĕç. Каччи, хĕрача аллине хăй аллинчен ямасăр, ăна темскер каларĕ те, вĕсем иккĕшĕ те хавассăн кулса илчĕç, вара сасартăк каялла çаврăнса, пӳрт умĕнчен тепĕр хут иртрĕç. Сăнӳкерчĕк патĕнчен пăрăннă пекех, Алексей чӳрече умĕнчен те йывăр туйăмпа пăрăнса кайрĕ.

«Йĕри-тавра пăхатăн та,—шухăшларĕ вăл малалла,—çынсен хаваслă, шавлă, илемлĕ пурнăçне куратăн. Кашни çынах мĕн те пулин тăвать, ĕçлет, мĕн çинчен те пулин ĕмĕтлетенет. Кашни çыннăнах мĕн те пулин хаваслăнмалли, çунатланмалли япала пур. Пăх-ха эсĕ çĕршыв çийĕн çĕкленсе: заводсем-фабрикăсем кĕрлеççĕ, хирсенче тырпул кашлать, çулсемпе машинăсем, поездсем чупаççĕ, Сталинградра, Куйбышевра халăх Атăла пĕвелет... Пĕтĕмĕшпе илсен, пирĕн пурнăç—шавлă, телейлĕ, хаваслă... Анчах çав пĕтĕмĕшĕ текен сăмах, ăна ăнлану енĕпе илсе пăхас пулсан, пĕр пĕлтерĕш пулин те, пĕр япала мар, темĕн чухлĕ вак япаларан пухăнса пулать».

Урай варринче чылайччен хускалмасăр тăнă хыççăн, Алексей урамалла тухса кайрĕ. Вăл хăйне чăнах та чăтма çук йывăр туйрĕ, çав туйăм унăн мĕнпур кĕлеткине хĕстерсе тăнăн туйăнчĕ. Вăл кама та пулин курса калаçасси çинчен шухăшламарĕ, ниçта кайма та пĕлмесĕр, урам тăрăх кăна утрĕ.

Анчах инкеке лекнĕ çын нумай чухне хăй инкекне хăех татах та пысăклатса яма пултарать (пĕр вĕççĕр ун çинчен шухăшласа), хăй çавăн пек тунине ун чухне вăл, паллах, курмасть, асăрхамасть. Çавăнпа ăна ниçта кайса кĕмелле мар йывăр пулса çитет, ун чухне — çухалса кайма та, йăлтах пĕтсе ларма та пулать. «Эпĕ хамах мĕнле те пулсан çул тупăп, çынсем пулăшни мана — кирлĕ мар»,—тесе шухăшлани вара сиенлĕ те пулма пултарать.

Хĕвел хула хĕрринчи кирпĕч завочĕн трубисем патне çити аннă, Алексей хваттерĕн кантăкĕсем, хĕрлĕ çутă ӳкнипе, пушар чухнехи пек йăлтăртатаççĕ. Сывлăшра çамрăк тополь çулçисен пылак шăршийĕ хумханса тăрать, тата çав вăхăтрах каç енне сивĕне пуçланă кивĕ чул çуртсен темле сулхăн шăршийĕ те кас-кас сисĕнкелесе илет...

...Таня, хăйне епле çирĕпрех тытма тăрăшрĕ пулин те, алăк умĕнче чаранса тăмасăр пултараймарех—кăкăрĕнче сывлăш пӳлĕне пусланине вăл аванах туйрĕ. Мĕнле кĕтсе илме пултарать халь ăна Алексей? Чи малтанхи сăмахĕ мĕнле ун? Хăй тата, Таня, мĕн калĕ ăна?..

Анчах хумханни ахалех пулчĕ: Алексей килте мар иккен — хваттерне питĕрсех кайнă... Таня хăйне кăшт çăмăлрах туйса илчĕ, пĕр самант алăк патĕнче хускалмасăр тăчĕ. Анчах çавăнтах ăна малтанхи туйăмсем тепĕр хут çавăрса илчĕç. Мĕн тума килчĕ вăл кунта халь? Мĕн калана пулĕччĕ вăл Алексее? Шелленĕ пулĕччĕ-и, каçару ыйтнă пулĕччĕ-и? Мĕншĕн каçару ыйтмалла? Мĕншĕн шеллемелле? Ыран Алексейĕн суда каймалла пулнипе-и? Ах, мĕн тери пĕтĕмпех киревсĕр пулса тухрĕ вĕсен! Мĕн тери кĕтмен япаласем! Анчах ăçта халь Алексей? Мĕн шухăшлать вăл?..

Таня кайма та тăнăччĕ, анчах хăй сисмесĕрех сасартăк кăртах сикрĕ: вăл Алексей хваттерне уçма пултарать! Ара унăн çăраççи пурçке-ха! Çапла çав, çаплах, ридикюльте—çăраççи пур... Вăл ун çинчен кĕтмен çĕртен кăна аса илчĕ-ха. Пĕрле пурăннă чухне вĕсен иккĕшĕн те пĕрер уçă пурччĕ, кунтан пăрахса кайнă чух Таня ăна хăварман, хăйĕн çăраççийĕ—хăйпе пĕрлех кайнă... Вăл халь ак, хваттере кĕрсе, Алексее кĕтсе ларма та пултарать. Анчах... уçма ирĕк пур-и унăн ют çын хваттерне? Ку хваттер халь унăн мар-çке-ха, вăл унта виçĕ эрнене яхăн пурăнман ĕнтĕ. Уçма юрать-и вара ют çын хваттерне?..

Алă — алăк еннех туртăнчĕ. Таня хăйне чарма пултараймарĕ. Вăл çăраççие çăра ăшне чикрĕ те сулахайран сылтăмалла икĕ хутчен пăрчĕ: «Ют çын хваттерне... Ют çын хваттерне!..»—янăрарĕ унăн пуçĕнче, çак сăмахсем çапла шелсĕр янрани унăн куçĕсене шывлантарчĕ, тĕтрелентерчĕ...—Ют çын хваттерне!..»

Алăк чĕриклетсе уçăлчĕ...

Нимех те улшăнман иккен, хăшпĕр япаласем кăна хăйсен вырăнĕнче мар. Урайне шăлман, темиçе çĕрте пирус тĕпĕсем выртаççĕ. Сĕтел çине хут листисем йĕркесĕр сапаласа хунă—Алексей тем çырнă пулас... Ĕçлет-шим вăл вара халь, çырать-шим? Таня хут листисене уçкаласа пăхрĕ, сасартăк хăйĕн ятне курчĕ... «Пĕр япалашăн кăна ӳкĕнетĕп, Таня, киввийĕ манăн чи хаклă япалана илсе юлма пултарчĕ—сана..» Мĕн ку?—сасăпах пăшăлтатса ячĕ вăл, унтан ытти листасене пăхрĕ...

Вăл вĕсене хăварт страницăсем тăрăх йĕркелесе майлаштарчĕ те малтан пуçласа вĕçне çитиех вуласа тухрĕ. Унтан—хускалмасăр ларчĕ.

Алексей çаплах килмерĕ. Тата çур сехетрен Таньăн концерта ĕлкĕрмелле — вăл çаплах килмест... Концерта каймаллах-ха унăн, урăхла юрамасть, анчах Алексее те паян курмаллах!.. Халь вăл концерта каять, концерт хыççăн—килет. Анчах кайиччен пӳлĕме кăштах тирпейлесе хăварас, урай та йăлтах çӳпленсе кайнă. Тен, ăна Таня кайнăранпа пĕрре те шăлман...

...Залра оркестрăн хăватлă сасси янăрать. Чайковскин скрипка валли çырнă пĕрремĕш концерчĕ. Чĕре тĕпне тахçан ларса çирĕпленнĕ, манăçма пуçланă хуйхăллă туйăмсем те, савнăçлă кăмăл та пĕтĕмпех çĕнĕрен вăранать. Иртнĕ кунсем вăраннипе пĕрлех—çĕнĕ кăмăл çуралать. Виолончелĕн салхуллă сасси çумне Таня скрипки хутшăнать, оркестрти пур сасăсене те айккине сирсе ярса, хăй кăна янрама пуçлать. Хĕлĕхсен сасси мар, чĕрĕ сас, этем чунĕн сасси янраса тухать зала.

...Залра—çил-тăвăл çĕкленнĕ евĕр. Мĕнпур оркестр, ура çине тăрса, пуç таять. Дирижер Таня аллине чăмăртать..

Кун хыççăн—скрипка валли тутар темисемпе çырнă концерт, Леман. Оркестр умĕнче—каллех Таня. Халăх каллех алă çупса ярать, хĕрӳллĕн, кăмăлласа... Ку вăл—чап та, пархатарлăх та. Ку вăл—этем пултарулăхĕн хисепне йышăнни, ăна малалла татах та çӳлелле çĕклени... Талантлисем çак вăхăтра ним çинчен те шухăшламаççĕ, анчах—пурин çинчен те туяççĕ...

Дирижер патакне сулса ярать, концерт пуçланать. Шăп çав вăхăтра зала ӳсĕр çын утса кĕрет те, никам çине те пăхмасăр, никама та кансĕрлемесĕр малти ретелле пырса, унти пĕр пушă вырăна кĕрсе ларать. Вăл сцена çинчи çамрăк артистка çине куç илмесĕр пăхать, анчах лешĕ ăна, тепле майпа, асăрхамасть... Нимĕн те кирлĕ мар ăна халь, таçтан ӳсĕр килсе кĕнĕ çынна, вăл, тĕнчери мĕнпур япалана ĕмĕрлĕхех манса, хăй пурнăçне те манса, Таня çине çапла пĕр вĕçĕмсĕр, çулталăкĕ-çулталăкĕпе пăхса ларма та хатĕр, хăйне пăрахса кайнă Таня çине... Вăл ăна тепĕр хут хăйĕн тăвасси çинчен те шухăшламан пулĕччĕ, Таня сĕрме купăспа каланине пăхса, итлесе ларма кăна пултăрччĕ... Анчах сасартăк вĕсен куçĕсем тĕл пулчĕç — Алексей кăштах вырăнтан сиксе тăмарĕ... Темшĕн вăл çавăнтах куçне хупса хучĕ, уçсан — каллех Таня ун çине куçранах пăхнине курчĕ... Вăл сасартăк çав тери хăраса кайрĕ, Таньăпа хăй хушши çывăхланса пыра пуçланă пек туйăнчĕ ăна. Таня çаплах дирижер çине пăхмасăр сĕрме купăспа каларĕ, куçĕсем— Алексей куçĕсене пĕр самантa та айккине тартмарĕç. Алексей вара, мĕншĕнне хăй те пĕлмесĕр, ăнланмасăр, мĕнпур нервисемпе хыçалалла, пукан хыçĕ çумнелле туртăнчĕ, унтан чăтаймарĕ, сасартăк ура çине тăчĕ те проход тăрăх хăвăрт алăк патнелле утрĕ, хăвăрт, чупнă пекех... Таня скрипки сасартăк шăпланса ларчĕ, сĕркĕçĕ лăштăрах алăран ӳкрĕ. Чаршава хупрĕç; оркестр пăсăлса кайрĕ...

Пĕр çулталăк хушши—нумай мар... Анчах Ванькин хăй çиеле тухнишĕн кăмăллă ĕнтĕ. Мĕнех, вăл тĕрĕс турĕ. Вăл хăйне нихçан та кӳрентерме памĕ. Çитменнине тата, ĕç кунта кӳрентерни çинче кăна та мар, ĕç—чыс, совет çыннин чысĕ çинче, ăна таса та çирĕп упраса хăварасси çинче... Анчах Алексей ăна, Ванькина, куç хӳрипе те пăхмарĕ. Мĕншĕн çавăн пекех мăнкăмăлланмалли пур-ха унăн? Айăпне йышăнса, хăйне тивĕçлипе айăплама ыйтрĕ вăл. Тĕрĕс турĕ. Анчах Таня унпа

каласма тăрсан—чул чĕреллĕ çын пулчĕ, калаçмарĕ, чĕнмерĕ. Кӳренни-сем яланах мăнкăмăллă пулаççĕ-ши? Пĕлме хĕн, анчах Алексей хăйне кӳреннĕ пек тытмарĕ. Юратнă çыннăн куççульне те, пĕр каçрах йăлт шурса кайнă сăн-питне те—курмарĕ... Тен, чыса çухатнă çын чысшăн кĕрешекенсемпе калаçма тивĕç мар, терĕ?..

...Çу каçиччен вăл çурçĕр енче вăрман каснă çĕрте ĕçлерĕ, кĕр енне вĕсен ушкăнне хăма çуракан пĕр пĕчĕк завода куçарчĕç. Алексей сахал калаçрĕ, нумай — итлерĕ...

Анчах кĕркунне вăл хытă чирлесе ӳкрĕ, ăна юлашкинчен больницăнах вырттарчĕç. Вăл часах чĕрĕлетĕп тесе шанчĕ—хăйĕн чирĕ шала кайсах пычĕ...

...Тулта—çиллĕ çанталăк... Çав кунхине хула урамĕнчи йывăççем йăлтах çаралса юлчĕç, асфальт çийĕпе—типĕ çулçăсем вĕçрĕç...

...Театртан тухсан, Таня алăк умĕнче Сергей Ванькина тĕл пулчĕ, вăл Таня тухассине юриех кĕтсе тăнă пулас...

— Эсир темшĕн паян салхуллă пек, Татьяна Васильевна,—сăмах хушрĕ Ванькин.

Таня чĕнмерĕ.

— Тата виç кунтан тухса та каятăр ĕнтĕ,—малалла тăсрĕ Ванькин.—О, мĕн тери телейлĕ эсир! Мĕнпур Европăна куратăр, унти артистсемпе паллашатăр... Концерт хыççăн, тен ,вĕсемпе чи чаплă ресторансенче пĕрле ларса калаçăр, унти культура йĕркисенче... Да-а, сирĕн—чăн-чăн телей, Татьяна Васильевна. Сирĕн чап халь ĕнтĕ хамăр çĕршывра кăна мар, мĕнпур Европăра паллă пулать! Çапах та эсир, эсир паян темскер, кунĕпех салхуллă... Каçарăр, Татьяна Васильевна, мĕн çинчен шухăшлатăр эсир? Эпĕ сăнарăм-çке-ха, ирех...

— Эпĕ телей çинчен шухăшлатăп, — терĕ Таня, Ванькин çине пăхмасăр.

— Телей çинчен?..

— Çапла... Калăр-ха, Сергей Ильич, мĕн хаклăрах сирĕн шутпа: искусство-и, е çын телейĕ, çын пурнăçĕ?

— ...Третий храни: поклоняйся искусству,

Только ему, безраздельно, бесцельно!—

пуçне мăнаçлăн çĕклесе каларĕ Ванькин.—Эпĕ Блокпа пĕтĕмпех килĕшетĕп. Искусство—нимрен те хаклăрах!

— Тавтапуç, Сергей Ильич, эсир мана тĕрĕс çул кăтартса патăр. Эпĕ паян Алексей питĕ йывăр чирпе выртнине пĕлтĕм, пĕр уйăха яхăн вăл—больницăра... Эпĕ ыран ун патне тухса каятăп та...

Ванькин сасартăк утма чарăнчĕ.

— Татьяна Васильевна!—терĕ вăл, урăх ним калама та пĕлмесĕр.

— Эпĕ сиртен канаш ыйтрăм, Сергей Ильич, эсир—канаш патăр. Анчах эпĕ çапла шухăшлатăп: мĕн те пулин пысăк ĕç тумалла пулсан, яланах сиртен канаш ыйтас пулать, вара эсир каланине хирĕç тăвас

пулать — нихçан та йăнăшмăн... Хăвăр çинчен кăна шухăшлатăр иккен эсир...

Ванькин сасартăк хĕрелсе кайрĕ.

...Тепĕр кун Таня каçхи поездпа Алексей патне тухса кайрĕ... Вăл çĕрĕпех вагон чӳречинчен пăхса пычĕ. Çавăн чухне мĕнпур çутçанталăк: хирсем те, вăрмансем те, ялсем те, хуласем те, уйăх çуттинче кăваккăн йăлтăраса юхакан юханшывсемпе пин-пин çăлтăрлă тӳпе те,— пурте, пурте этем чунĕ çинчен, унăн таса юратăвĕ çинчен асамлă юрă юрланă пек туйăнчĕ...

...Тата икĕ кунтан больницăра Алексей кăкăрĕ çине пичĕпе лăпчăнса ĕсĕклесе ярсан, вăл унта, унăн кăкăрĕнче, çирĕп те сывă чĕре йĕркеллĕн тапнине туйрĕ.

— Эпĕ чĕрĕлнĕ Таня!—вĕри аллисемпе унăн çӳçне, тăнлавĕсене сăтăркаласа каларĕ Алексей.—Вырăн çинчен те ак часах тăратăп... Эпĕ халь йĕркеллĕ пурăнайман та вĕт-ха, ку вăл—пурнăç пуçламăшĕ кăна!..

Таня ăна нимĕн те каламарĕ, унăн кушăрканă тутинчен, питĕнчен кăна пĕр вĕççĕр чуптурĕ. Ун чухне вĕсен, палтах, калаçни, ăнлантарма тăрăшни кирлĕ те марччĕ, мĕншĕн тесен вĕсем пĕр-пĕрне, пĕр-пĕри мĕн шухăшланине, мĕн чăтса ирттернине—пĕр сăмах каламасăрах ăнланма пултарчĕç... Çавăн пек çынсем тĕнчере — телейлĕ.

---

КНИЖНАЯ ПАЛАТА
Чувашской АССР
г. Чебоксары

Цена 50 коп.

В. ИГНАТЬЕВ

# ТАНЕЦ МАЛЕНЬКИХ ЛЕБЕДЕЙ

На чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ—1957